39-137

Г. Харлампьев



# Çамрăк художник

**Асӑрханӑ йӑнӑшсем.*)**

| *Стр* | *строка* | | *пичетленӗ* | *вуламалла* |
|---|---|---|---|---|
| 4 | ҫӳлтен | 1 | е | ме е |
| 10 | аялтан | 1 | тӑ р. | тӑ-вӑр |
| 31 | „ | 2 | ттӗмрех | тӗттӗмрех |
| 31 | „ | 3 | хыҫҫ | хыҫҫӑн |
| 31 | „ | 4 | аптӑкӗ- | лаптӑкӗ- |
| 31 | „ | 5 | хутӑшта | хутӑштарса |

*) Асӑннӑ йӑнӑшсем типографи айӑпӗпе пулнӑ.

Г. Харлампьев—Ҫамрӑк художник.

Г. ХАРЛАМПЬЕВ

# ҪАМРӐК ХУДОЖНИК

## ХАРПӐРХАЙ ТӖЛЛӖН ӲКЕРМЕ ВӖРЕНЕССИ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
"___" ______________ 193 г.
Подпись

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1939

# УМĔН КАЛАНИ

Юлашки çулсенче шкул ачисемпе колхоз çамрăкĕсем хушшинче картинăсем ӳкерме вĕренес интерес ӳснĕçем ӳссе пырать. Хальхи вăхăтра Чăваш Совет художникĕсен Союзĕн правленине, Халăх творчествин çуртне, „Пионер сасси“ редакцине ӳкерме вĕрентсе консультаци пама ыйтса çырнă çырусем вĕçĕмсĕр килсе тăраççĕ.

Паллах, кашни çыру çинех уйрăмăн консультаци парса тăма çук. Çак ĕнтĕ, ку тĕлĕшпе пĕр пĕчĕк кĕнеке те пулин кăларса пама кирлине калать.

Çак ыйтупа чăвашла çырнă кĕнекесем те пулман. Пичет урлă консультаци парса тăрасси те çителĕклĕ пулман, ку ĕнтĕ пысăк çитменлĕх.

Çаксене шута илсе эпĕ çак пĕчĕк кĕнекере картинăсем ӳкерме интересленекен çамрăксене малтанхи вăхăтра пĕлме кирлĕ майсем çинчен кĕскен те пулин ăнлантарса парас тетĕп.

Паллах, çак кĕнекепе усă курнипех ӳкерме вĕренсе художник пулма пулать тесе шутлани пысăк йăнăш пулĕччĕ. Лайăх ӳкерме вĕренес пулсан питĕ нумай пĕлни, ку тĕлĕшпе пĕрмаях ĕçлесе вĕренни кирлĕ. Çапах та колхозри вулав çуртĕсенче, клубсенче ĕçле-

е ӳкерчӗксем ӳкерес тӗлӗшпе питех те интересленсе художествӑллӑ шкулсене кӗме хатӗрленес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ пулӑшу парасса шанатӑп.

Эпӗ ку кӗнекене икӗ пая уйӑртӑм. Пӗрремӗш пайӗнче ӳкерме вӗренме мӗнрен тытӑнмаллине, акварелӗ сӑрсемпе ӗҫлеме вӗрессине малтанлӑха кирлӗ таран ӑнлантарса парас задача лартрӑм. Иккӗмӗш пайӗнче вулав ҫурчӗсенче, клубсенче ӗҫлесси ҫинчен кӗскен калатӑп.

Кӗнекепе тӗрӗс усӑ курас тесен, пӗррремӗш пайӗнче ӑнлантарса панӑ уйрӑм майсене, примерсене тӗплӗн ӑнланса, унта илсе кӑтартнӑ упражненисене темиҫе хут ӳкерсе хӑнӑхни кирлӗ. Пӗр майлӑ примерсемпе кӑтартса, ӳкерчӗксене тӗплӗн ӑнланса, ӑна тӗрӗс ӳкерме вӗренмесӗр, урӑх майлӑ примерсемпе ӳкерме тытӑнни кирлӗ мар.

Кӗнекере каласа панӑ майсене тӗрӗс ӑнланма кашни примерах ӳкерчӗксемпе кӑтартнӑ. Анчах та, ӑна тӗрӗс ӑнланса илес тесен, вӑл ӳкерчӗксене пӑхса ӳкерсе илни кирлӗ мар, унта кӑтартнӑ пример евӗр харпӑрхӑй тӗллӗн шутласа илсе урӑх примерсем, урӑх япаласем ӳкермелле. Сӑмахран, кӗнекери 13-мӗш ӳкерчӗк ҫинче эпир тӗрлӗрен япаласенчен (корзинка, кӑшман, хӑяр, кишӗр) натюрморт лартса ӳкерессине кӑтартса панӑ.

Эсир кун пек примера çав япаласенчен çеç мар, тата ытти япаласенчен те пуçтарса çавӑн пек натюрмортсем темиçе хут та, темиçе майлӑ та лартса ӳкерӗр. Çавӑн пекех ытти примерсенче те, калӑпӑр, çынсене ӳкернӗ чух та, пейзажсем, выльӑх-чӗрлӗхсем ӳкернӗ чух та вӗсене тӗрлӗ майлӑ (тӗрлӗ положенире) ӳкерсе илӗр.

Ку кӗнекере эпир, май пулман пирки, хӑшпӗр сӑрсемпе пичетлеме кирлӗ ӳкерчӗксене пӗр тӗспех пичетлетпӗр.

Юлашкинчен, ку кӗнекепе усӑ куракансенчен эпир, ку кӗнеке сире мӗнле килӗшнипе унта сирӗн шухӑшсемпе мӗнле çитменлӗхсем пурри çинчен çак адреспа çырса пӗлтерме ыйтатпӑр:

г. Чебоксары, Дом печати, Чувашгосиздат.

---

## ӲКЕРМЕ ВӖРЕНМЕ МӖНЛЕ ХАТӖРСЕМПЕ МАТЕРИАЛСЕМ КИРЛӖ

Ӳкерме вӗренекенсене малтанлӑха художниксене кирлӗ хатӗрсем пурте кирлӗх те мар. Вӗсене валли чи кирлӗ хатӗрсем: карандашсем, кистьсем, хуламрах шурӑ хут, хура туш тата 3—4 тӗслӗ акварелльӗ сӑрсем пулаҫҫӗ.

Укерчӗксем ӳкерме кирек мӗнле хура карандаш та юрать. Пуринчен ытла 1-мӗшпе 2-мӗш номерлӗ карандашсемпе усӑ кураҫҫӗ. Кӑмрӑкпа усӑ курма та пулать. Ун пек кӑмрӑка кашниех хатӗрлеме пултарать. Ӑна ак ҫапла тӑваҫҫӗ: хурӑн йӑваҫҫин карандаш тачӑкӗш тураттисене илмелле те вӗсене хӑйӑр тултарнӑ чугун е тӑм чӳлмек ӑшне тултарса вӗри кӑмакана лартмалла. Хурӑн тураттисем вара вӗрипе ҫунса кӑмрӑкланаҫҫӗ.

Акварелльӗ сӑрсемпе тата тушпа ӗҫлеме ҫемҫе кистьсем кирлӗ. Кистьсене 2, 5, 7, 9, 12-мӗш номерлисене илмелле. Ҫуллӑ тата ҫилӗмлӗ




**1-мӗш ӳкерчӗк. Акварелле сӑрсем тата мольберт.**

сăрсемпе ĕçлеме хытăрах шăртлă кистьсем кирлĕ.

Сăрсенчен кармин, ультрамарин, кадмий тĕслисем пулсан çитет. Çак виçĕ тĕслĕ сăрсене хутăштарса ытти тĕссене те тума пулать.

Пĕр-ик сăмах мольберт çинчен. Мольберт вăл хут е ытти япаласене вырнаçтарса хурса ӳкермелли хатĕр—станок. Ăна кашниех туса хатĕрлеме пултарать. Паллах, ӳкерме вĕренсе çитнĕçем станок та кирлĕ пулать.




2 мĕш ӳкерчĕк. Кистьсем. 3, 7, 9, 12 №-лисем акварелле сăрсемпе ĕçлемеллисем, ыттисем çуллă сăрсемпе.

# ЎКЕРМЕ МĔНРЕН ТЫТĂНМАЛЛА

Ўкерме вĕреннĕ чух чи малтан ўкерме çăмăл, тўрĕ линиллĕ япаласем илмелле. Çавăнпа та эпир малтан тăваткĕтеслĕ йывăç арчана ўкерĕпĕр.

Йывăç арча илсе, ăна пĕр пуçне çеç курăнмалла туса, сĕтел çине лартатпăр. Арча çине сăнаса пăхнă хыççăн, эсир малтанах унăн пуçĕ тăваткĕтеслине куратăр. Унăн пур кĕтесĕсем те, аяккисем те пĕрпекех. Çапла ĕнтĕ, сире курăнакан арча пуçĕ квадрат евĕрлĕ. Халĕ ăна сăнаса илнĕ хыççăн ўкерме тытăнма та пултаратпăр.

Хура карандаша вăрăм та çивчĕ шĕвĕртĕр. Унтан ăна виçĕ пўрнепе вăрăммăн, çăмăллăн тытса ўкерме тытăнăр.



3-мĕш ўкерчĕк. Карандаша тĕрĕс çапла тытмалла.

Чи малтан, ўкерчĕке хут листи çине тĕрĕс вырнаçтарас шутпа, карандаша хытă пусмасăр çинçе линисемпе паллă туса тухăр. Ўкерчĕке ытла пĕчĕк мар, хут листи çине шăп вырнаçмалла тăвăр.

Ӳкерчĕке вырнаçтарма паллă туса хунă хыççăн, аялтан тата çӳлтен выртакан линисене сылтăмран сулахаялла тӳрĕ туртса хурăр. Унтан икĕ вертикаллĕ линине горизонталлĕ линисемпе тӳрĕ кĕтессем пулмалла пĕтĕштерсе хурăр. Вăл линисен тăрăшĕсем пурин те пĕр пек пулччĕр. Çакăн хыççăн сирĕн квадрат пулса та тăчĕ.

Квадрат тĕрĕс пулмасан, йăнăш вырăнсене резинкăпа тасатса тепĕр хут хурарах, паллăрах линисемпе тӳрлетсе хурăр. Кун пек упражнение темиçе хут туса тĕрĕс ӳкерме вĕреннĕ хыççăн урăх упражненисене куçма та пултараттăр.



4 мĕш ӳкерчĕк.
Квадрат.

Халĕ арчана пуçĕпе хăрах аякки курăнмалла лартăр. Анчах малтан ăна каллех тĕплĕн сăнаса пăхăр, мĕншĕн тесен çапла лартнă чухне унăн икĕ енĕ икĕ еннелле кайса ансăрланса пынă пек туйăнаççĕ.

Çапла лартнă хыççăн ăна уçса хурăр. Çакăн хыççăн ăна ӳкерме татах йывăрланчĕ. Унăн хупăлчи те, çав икĕ енĕсем пекех, пирĕн куçа ансăрланса, шĕвĕрленсе пынă пек туйăнать. Унăн аяккисемпе тӳрĕ линисем туртса кайсан, вĕсем пĕр точкăра пĕрлешеççĕ (5-мĕш ӳкерчĕке пăхăр).



5-мĕш укерчĕк. Арча.

Ăнланмаллarax пултăр тесен, тепĕр пример илсе пăхăпăр. Сăмахран, пӳрт чӳречине аякран кайса пăхсан, унăн çӳлтипе аялти хĕррисен линийĕсем каллех пирĕн куçран инçене юлнăçемĕн ансăрланса пынă пек туйăнаççĕ. Вăл линисене шухăшпа тăсса кайсан, вĕсем пирĕн куç тĕлĕнче горизонтра тĕл пулаççĕ. Линисем çакăн пек ансăрланса пырса горизонтра пĕр точкăра тĕл пулнине перспектива теççĕ. Перспектива правилине пĕлни пире ӳкерчĕкре япаласене объемлă туса кăтартма пулăшать. Ăна тĕплĕн ăнланса илес тесен, эсир çак арчанах çӳлте кăтартнă майлă (е тата урăхла та) лартса ӳкерĕр. Вăл ӳкерчĕк тĕрĕссипе тĕрĕс пулманнине эсир çак 5-мĕш ӳкерчĕкре кăтартнă пек линисемпе тĕрĕслесе пăхăр.

Халĕ çаврашка япала—тарелка ӳкерсе пăхăпăр. Ăна малтан эсир хăвăра хирĕç тӳрĕ тытса пăхăр. Кун пек пăхсан, вăл сире çапçавракан курăнать. Эсир кун пек çаврашкасене циркульпе те ӳкерме пултаратăр. Çавăнпа та эпир ăна циркульпе ӳкерме çук майлă лартса циркульсĕр ӳкерĕпĕр.

Халĕ ăна сĕтел çине кăшт тайăлтарса лартса пăхăр. Кун пек лартса пăхсан, вăл сире тăрăхла ункă пек курăнать. Ăна мĕнчул ытларах тайăлтаратăр, вăл çавăн чул тăрăхланнă пек курăнать.

Тарелкăна чи варри тĕлĕнчен урлă каçа çиппе çыхса хурăр. Унтан çиппине горизонталлĕ выртмалла туса тарелкине каялла чалăштарса лартăр. Ăна лайăхрах сăнаса пăх-



6-мĕш ӳкерчĕк. Тарелка: сулахайри—тӳрĕ тытсан, сылтăмри—чалăштарсан.

сан, унăн çўлти çурри аялтинчен ансăртарах-хăн курăннине асăрхатăр. Тарелкăна малалла чалăштарса хурсан, эсир унăн аялти çурри ансăртараххăн курăннине сăнаса илетĕр. Çакăн пек курăннине çаврашкан перспективи теççĕ.

Çавăнпа та ăна ўкернĕ чухне, малтан хут çине çав çип вырăнне пĕр тўрĕ лини туртса хурăр. Унтан çав линиваррипе кăшт кăна палăракан çинçе линипе тарелкăна ўкерме йĕр туса хурăр. Перспектива тĕлĕшĕпе тĕрĕс турăр пулсан, урăхла каласан, тăрăхла ункăн çўлти çурри ансăртарах, аялти сарлакарах пулсан, варри урлă туртса хунă тўрĕ линине резинкăпа тасатса, кирлĕ линисене карандаша хытăрах пусса ўкерсе тухăр. Çапла сирĕн тарелка ўкерчĕкĕ те хатĕр пулать.

Халĕ тăм кăкшăм ўкерсе пăхăпăр. Унăн çур ункăллă линисем пур. Кăкшăма ўкернĕ чухне унăн măйĕпе хырăмне танлаштарса пăхса, вĕсен хушшинчи виçине (пропорцине) тупасси—чи паллă задача пулса тăрать. Ăна (пропорцие) кăкшăма виçсе мар, куçпа пăх-сах шутласа илме вĕренмелле. Калăпăр, эсир ўкерекен кăкшăмăн аялти пайĕ çўлтинчен 1,5 хут çўлĕрех. Ку виçене (пропорцие) шут-ласа тупнă хыççăн, хут листи çине çинçе линисемпе паллă туса хурăр. Ĕç çăмăлтарах пултăр тесен, хут листин варри тĕлĕнчен çўлтен аялалла пĕр тўрĕ лини туртса хурăр.

Ку лини çине вара кăкшăмăн пĕтĕм çӳллĕшне, унăн çӳлтипе аялти пайĕсене паллă туса хурăр.

Çапла тусан, кăкшăм тутине (анине) ӳкерес шутпа, çӳле хăвăра курăнакан тăрăхла ункăна ӳкерсе хурăр. Унтан çав тăрăхла ункăн икĕ аяккине аялалла, кăкшăм хырăмĕ виçи тĕлне çитиччен икĕ тӳрĕ лини туртса хурăр. Халĕ аялти пайне (хырăмне) ӳкерес майпа вăхăтлăха кăкшăм хырăмĕ тĕлĕнчен урлăлла пĕр тӳрĕ лини туртса, вăл лини çине кăкшăм хырăмĕн сарлакăшне паллă туса хурăр. Унтан çав виçепе кăкшăм хырăмĕ вы-



**7-мĕш ӳкерчĕк. Кăкшăм: сулахайри—кăкшăмăн контурĕ, варринчипе сылтăмрине икĕ майпа тушовка тунă.**

рӑнне çаврашка ӳкерӗр. Юлашкинчен, кӑкшӑм тӗпне ӳкернӗ хыççӑн, вӑхӑтлӑха тунӑ ытлашши линисене резинкӑпа тасатса, кирлӗ линисене паллӑрах ӳкерсе ӗçе пӗтерме те пултаратӑр.

Çапла ӗнтӗ пирӗн кӑкшӑм ӳкерчӗкӗ хатӗр тейӗпӗр. Анчах ку кӑкшӑм ӳкерчӗкӗ пире килӗшмест-ха, вӑл пире лапчӑк пек курӑнать. Ӑна чӑн-чӑн кӑкшӑм пек тӑвас тесен, тушовка тенӗ майпа усӑ курмалла пулать. Эпир ку кӗнеке çинче карандашпа ӳкернӗ чух икӗ майпа тушовка тӑвассине кӑтартатпӑр (7-мӗш ӳкерчӗк çине пӑхӑр). Ку майсенчен штрихсемпе тунӑ тушовкӑна тӗрӗсрех тесе шутлаççӗ. Тушовкӑна карандашсӑр пуçне кӑмрӑкпа та тума пулать. Ӑна тума ӳкерчӗкӗн пӗтӗм контурне пӗтерсен тин тытӑнмалла. Ӑна тытӑниччен малтан ӳкерекен япала çинче хӑш тӗлте чи тӗттӗм, хӑш тӗлте çутӑрах, хӑш тӗлте чи çуттине тӗплӗн пӑхса уйӑрса илмелле.

Кашни япала çинех çутӑ ӳкет пулсан, ун çинче вара çутӑлса тӑракан çутӑ, çур тӗксӗм, тӗксӗм, урӑх япаларан ӳкекен çутӑ (рефлекс) пур. Çутӑ яланах малтан çуртӗксӗме, унтан тӗксӗме, е çуртӗттӗме, унтан тӗттӗме куççа пырать. Ӑна уйӑрса илес тесен, çуттине тӗттӗммипе тата çуртӗттӗммипе танаштарса пӑхмалла. Çакна пӗлес майпа есир хӑ-

вăр умри кăкшăм çинех пăхăр. Чи çутă вырăн – çутăлса тăракан вырăн пулать. Çутăпа тĕттĕм вырăнсен хушшине çинçе йĕрпе паллă туса тухăр. Ăна уйăрса илнĕ хыççăн, малтан чи тĕттĕм вырăнсенчен пуçласа, ерипен çутăрах вырăнсене куçса, тушовка тума тытăнăр. Тĕттĕм вырăнсене тушовка тунă чух карандаша хытăрах пусса штрихсене хулăнрах, çутăрах вырăнсене куçнă май çăмăллăн пусса çинçерех туса пырăр. Тĕттĕм вырăнсене штрихлеме çемçерех (1-мĕш№-лĕ) карандашпа ĕçлес пулать.

Тушовка тунă чух ăна тĕплĕн шухăшласа, штрихсене тирпейлĕн, пĕр еннелле тумалла. Тушовка тумалли майсенчен чи тĕрĕсреххи вăл, ӳкерекен япалан форми майĕпе, формăна пĕрмай пăхăнса туни пулать. Тушовка тунă чух, япалана ӳкернĕ чухнехи пекех, япалан тĕрлĕ кирлĕ мар вак-тĕвекĕсене кăтартасшăн тăрăшма кирлĕ мар, чи малтан япалан пĕтĕм формине кăтартма тăрăшмалла.

Тушовкăна тĕплĕн вĕренсе, ăна тĕрĕс тума пĕлни сăрсемпе ĕçленĕ чухне питĕ пулăшать. Тушовкăна карандашсăр пуçне кăмрăкпа та аван тума пулать. Кăмрăкпа ĕçленĕ чухне тунă йăнăшсене резинкăсăр пуçне пир татăкĕпе те çăкăр çемçипе те тасатса тӳрлетме пулать.

Çапла ĕнтĕ эпир халĕ çаврашка, çур çав-

рашкаллă япаласене ӳкерессипе, унти хăшпĕр правилăсемпе паллашрăмăр. Кун пек япаласене ӳкерме пĕлни вăл кирек мĕнле ҫаврашкаллă е шар евĕрлĕ япаласене ӳкерпĕ чухне питĕ кирлĕ. Шар ӳкернĕ чух пĕр тĕрĕс ҫаврашкаункă туни ҫеҫ кирлĕ. Ҫакăн хыҫҫăн унăн формине тушовкăпа тĕрĕс туса кăтартасси ҫеҫ юлать. Ҫавăнпа та ҫаврашка е чăмăр япаласене ӳкернĕ чухне пуринчен ытла тушовка тума аван пĕлни кирлĕ пулать.



8-мĕш ӳкерчĕк. Шар.

Эпир япаласене пĕрерĕн, уйрăммăн илсе ҫеҫ ӳкертĕмĕр. Халĕ темиҫе япалана пĕрле ӳкерме вĕренĕпĕр. Сăмахран, ҫав малтан ӳкернĕ япаласенех (арча, кăкшăм, тарелка тата ытти те) пĕрле ӳкерĕпĕр. Вĕсене мĕнле ӳкересси ҫинчен эпир кунта тепĕр хут каласа тăмăпăр, анчах вĕсене епле пĕрлештерсе, вырнаҫтарса лартасси ҫинчен пăртак чарăнса тăрăпăр.

Темиҫе япалана пĕрле ӳкернĕ чухне вĕсене епле вырнаҫтарса лартассипе вĕсене хăш енчен -пăхса ӳкерессине пĕлни, вĕсен илемлĕ енне тупма хăнăхни питĕ кирлĕ. Вăл пейзаж-

сене тата çынсене ӳкернĕ чухне питĕ пулăшать.

Кун пек чухне япаласене илемлĕн вырнаçтарса лартма эсир хăвăр та çăмăллăнах пултаратăр. Илемлĕ пĕрлештерсе лартас тесен, вĕсене темиçе майлă та лартса пăхни кирлĕ. Мĕнле лартсан илемлĕн курăнать, çавăн пек лартса ӳкерме пулать. Тĕслĕх эпир кăкшăм, чей чашки тата пĕр-пĕр кубла япалана пĕрле вырнаçтарса лартса ӳкерĕпĕр. Вĕсен хыçне, фон вырăнне, пĕр-пĕр пир татки е алшăли çакса ярăпăр (9-мĕш ӳкерчĕке пăхăр).



9-мĕш ӳкерчĕк. Темиçе япалана пĕрле ӳкерни.

Вĕсене ӳкернĕ чухне пуринчен ытла хут листи çине вырнаçтарма пĕлни кирлĕ. Çавăнпа та хут листине çӳлĕшне е тăрăшне тытса ӳкерме пĕлни те кирлĕ. Кунта кăтартнă япаласене ку майпа лартса ӳкерес пулсан, паллах, хут листине çӳлĕшпе тытса ӳкермелле. Эсир çакна яланах асра тытăр.

Ку вăхăтчен эпир карандашпа е кăмрăкпа çеç ÿкертĕмĕр. Халĕ перопа ÿкерсе пăхăпăр. Перопа ÿкерме ахаль перопа хура туш çеç кирлĕ.

Перопа ÿкерес техникăна хăнăхас майпа эпир малтан пĕр-пĕр ÿкерме çăмăлтарах япала, сăмахран, чей чашки илĕпĕр. Малтан ăна карандашпа çинçе линисем туса ÿкерĕр. Унтан, кирлĕ мар линисене резинкăпа тасатса, перопа ÿкерме тытăнăр.

Перопа туш çине чиксе илсе, тушне перо çине кăшт илĕр те (нумай илсен тумлама пултарать) малтан чей чашкин контурне ÿкерсе тухăр. Унтан, чей чашкин объемлăхне кăтартма, тĕттĕм енне штрихлесе тĕттĕмлетĕр. Штрихлеме темиçе майпа та пулать. Эпир кунта икĕ майлă штрихленине кăтартатпăр.

Перопа ÿкерсе штрихленĕ чухне алăна аван хăнăхтарни кирлĕ. Паллах, вăл нумай ÿкернинчен çеç килет. Кунсăр пуçне перопа ÿкерес техникăна вĕренме кĕнекесем çинчи ÿкерчĕксем пулăшма пултараççĕ. Кĕнекесене яланах



10-мĕш ÿкерчĕк. Чей куркисем (штрихлесе ÿкернĕ).

профессиллӗ художниксем, граверсем илемлетеҫҫӗ. Анчах та кӗнекери ӳкерчӗксенчен ӳкерсе илме кирлӗ мар, вӗсен техникисемпе паллашма ҫеҫ кирлӗ. Ку тӗлӗшпе пуринчен ытла паллӑ художниксен ӳкерчӗкӗсемпе паллашма тӑрӑшмалла.

Халӗ кистьпе ӳкерес майпа паллашӑпӑр. Кистьпе ӳкерме карандашпа тушсӑр пуҫне тата кисть, стакан, туш шӗветмелли чей чашки кирлӗ. Хальхинче чейник ӳкерӗпӗр.

Малтан каллех чейникӗн контурне карандашпа туса тухӑр. Унтан кистьне туш ҫине чиксе илӗр те, ӳкерчӗке лаптӑкӗшпех хуратса тухӑр. Ҫапла лаптӑкӗшпех хуратса ӳкерессине заливка теҫҫӗ, ӳкерчӗкне хӑйне силуэт теҫҫӗ. Ҫапла майпа кирек мӗне те ӳкерме пулать. Кун пек ӳкернӗ чухне япала ҫинче ҫутӑлса тӑракан вырӑнсене асӑрхӑр. Ҫав вырӑнсене сӑрламасӑр хӑварсан, ӳкерчӗк питӗ илемлӗ пулать.



11 мӗш ӳкерчӗк. Заливкӑпа ӳкернӗ чейниксем.

Юлашкинчен, туша шывпа шĕветсе ӳкерес майпа паллашăпăр. Паллах, ку майпа ӳкерме йывăртарах. Çавăнпа та эпир сире ку майпа ытларах ĕçлесе алсене хăнăхтарма сĕнетпĕр.

Ӳкерчĕк тума пĕр йывăç улми илĕпĕр. Малтан карандашпа унăн контурне туса тухăр. Унтан кисть çине пĕртак туш илĕр те ăна чей чашки çине ярăр. Кун хыççăн кисть çине шыв илсе чей чашки çине янă туша шупкаланичченех шĕветĕр. Вара çав шĕветнĕ тушпа йывăç улми ӳкерчĕкне лаптăкĕпех сăрласа хурăр. Сăрланă чух сулахайран сылтăмалла, кистьне хутран уйăрмасăр сĕрсе каймалла. Шурă хăварас тенĕ вырăнсене карандашпа малтанах паллă тăвăр. Вĕсене вара тушпа сăрламасăр хăварас пулать.



12-мĕш ӳкерчĕк. Йывăç улми.

Кун хыççăн ӳкерчĕк типиччен тăхтаса тăрас пулать. Вара каллех туша чей чашки çине кистьпе ярăр та, ăна кăшт шывпа шĕветсе, улман тĕксĕмрех вырăнĕсе-

не кирлӗ таран хуратса тухăр. Çакăнпа ӗнтӗ ку ӳкерчӗке хатӗр тесе шутлама та пулать.

Çак техникăпа ӳкерме вӗренни вăл акварелле сăрсемпе ӳкернӗ чухне питӗ кирлӗ. Кун пек ӳкернӗ чухне тӗксӗмрех вырăнсене ытлашши хуратса йăнăш тунă пулсан, ăна кантăклă резинкăпа тасатса е шывпа çуса тӳрлетме пулать.

Шывпа çуса тӳрлетес пулсан, малтан кистьри туша шывпа çуса тасатмалла. Унтан таса кисть çине каллех шыв илсе, йăнăш тунă вырăнсене çуса ямалла. Çунă чухне, паллах, кисть каллех хуралать. Вара ăна каллех таса шывпа çуса тасатма кирлӗ. Кисть лайăххах тасалтăр тесен, ăна шывпа çуса тасатнă хыççăн, пир таткипе шăлса типӗтес пулать.

## АКВАРЕЛЛӖ СĂРСЕМПЕ ӲКЕРЕССИ

Халӗ акварелле сăрсемпе ӳкересси çинчен калаçăпăр. Мӗнле тата миçе тӗслӗ сăрсем кирли çинчен эпир малтанах каланăччӗ. Акварелле сăрсемпе ӳкерме шыва час çăтман хут кирлӗ, мӗншӗн тесен акварелле сăрсене шывпа ирӗлтереççӗ. Ик-виçӗ тӗслӗ сăрсене пӗрле хутшăнтармалла чухне, вӗсене таса кистьпе кашнине уйрăмăн илсе чей чашки çинче хутăштармалла. Пӗр тӗслӗ сăра нихă-

ҫан та тепӗр тӗслӗ сӑр ҫинче хутӑштарма юрамасть.

Халӗ пӗр тӗслӗ сӑрпа сӑрласа, пӗр ҫӑмӑл упражнени туса пӑхӑпӑр. Каллех пӗр йывӑҫ улми ҫеҫ илӗпӗр. Малтан карандашпа унӑн контурне туса тухар. Унтан кисть ҫине шыв илер те, хӗрлӗ сӑра чей чашки ҫинче шӗввӗн ирӗлтерер. Кун пек шӗвӗ ирӗлтернӗ хӗрлӗ сӑр вӑл шупка хӗрлӗ тӗс тӑвать. Унтан ҫав шупка хӗрлӗ тӗспе улман карандашпа тунӑ контурне лаптӑкӗпех хӑвӑрт сӑрласа тухар та типиччен тӑхтаса тӑрар. Типнӗ хыҫҫӑн ӑна каллех ҫав сӑрпах тата тепӗр хут сӑрласа тухар. Ҫапла вара ку ӳкерчӗк шупкарах хӗрлӗ тӗслӗ пулса тӑчӗ. Йывӑҫ улмин пӗтӗм объемне кӑтартма, кисть ҫине сӑра ытларах илсе е ҫӑрарах сӑр туса, тӗттӗм вырӑнсене тепӗр хут сӑрласа тухмалла. Халӗ эпир ку йывӑҫ улмине юриех хӗрлӗ тӗслӗ турӑмӑр-ха.

Ҫапла ӗнтӗ эпир ку ӳкерчӗкре пӗр тӗслӗ сӑрпах, ӑна шӗвӗрех е ҫӑрарах ирӗлтернипе, темиҫе тӗслӗ сӑр та тума май килнине куртӑмӑр. Халӗ ик-виҫӗ тӗслӗ сӑрсене хутӑштарса, урӑх тӗс туса пӑхӑпӑр.

Акӑ пирӗн виҫӗ тӗслӗ сӑр пур: кадмий (сара), кармин (хӗрлӗ), ультрамарин (кӑвак). Малтан эпир кадмийпе карминне те пӗр виҫеллӗ илсе, хутӑштарса пӑхӑпӑр. Ку икӗ тӗсе пӗр пек хутӑштарсан, урӑх тӗс—оранжевый тӗс

пулать. Карминне ытларах илсен вăл—тĕксĕмрех, кадмийне ытларах илсен—çутăрах пулать.

Халĕ тата кадмийне ультрамаринпа хутăштарса пăхар. Ку икĕ тĕсрен пирĕн тата урăх тĕс—симĕс пулса тăчĕ. Юлашкинчен карминне ультрамаринне хутăштарсан тата урăх тĕс—фиолетовый тĕс (кăвак кĕрен) пулать.

Çапла ĕнтĕ, эпир виçĕ тĕслĕ сăрăран ултă тĕс турăмăр. Кунсăр пуçне тата пĕр тĕслĕ сăррине сахалтарах, тепĕрне ытларах илсе хутăштарсан тата урăх тĕс пулнине те пĕлетпĕр.

Сăрсене хутăштарса урăх тĕс тăвассине çеç мар, вĕсен килĕшӳлĕхне пĕлни те питĕ кирлĕ. Пĕр тĕслĕ сăрăн çутăлăхĕ, илемлĕхĕ ун çумĕнчи урăх тĕслĕ сăрăран та килет. Ăна эпир пĕр пĕчĕк опыт туса пăхнипех ăнланса илме пултаратпăр. Сăмахран, пĕр кăвак тĕслĕ хутран икĕ пĕр пек виçеллĕ тӳркĕтеслĕхсем касса кăларар та, вĕсенчен пĕрне хура хут, тепĕрне шурă хут çине хурса пăхар. Хура хут çине хунă кăвак хут пире шурă хут çинчинчен уйрăмăнах шупканăн курăнать. Çавăн пекех сарă хутран касса кăларса пăхăр. Хура хут çинче сарă хут шурă хут çинчинчен çутăрах курăнать. Çапла ĕнтĕ, ку опыт тăрăх эпир сăрсен килĕшӳлĕхĕ вĕсене пĕлсе вырнаçтарнинчен те питĕ нумай кил-

нине пĕлтĕмĕр. Кун пек сăрсен килĕшӳлĕхĕсенчен чи паллăраххисем—çутăраххисем çакăн пек пулаççĕ.

а) хура çумĕнче шурă е сарă;

б) шурă çумĕнче хура, тĕксĕм кăвак е тĕксĕм хĕрлĕ;

в) хĕрлĕ çумĕнче симĕс е тĕксĕм кăвак;

г) сарă çумĕнче симĕс е хура.

Халĕ тата акварельлĕ сăрсемпе хĕрлĕ кăшманпа хăяр ӳкерсе пăхăпăр. Вĕсен тĕсĕсене сăрсемпе чăн-чăн пек ӳкерме тăрăшăпăр.

Сăнасарах пăхсан эпир хĕрлĕ кăшманра кăвак кĕрен (фиолетовый), шупка кăвак, тĕксĕм хăмăр тĕссем т. ыт. пуррине куратпăр. Çавăн пекех хăярта та çутă симĕс, сарă симĕс, кăвак симĕс тĕссем куратпăр. Пирĕн умра халĕ вăл тĕссене сăрсемпе ӳкерсе кăтартас задачă тăрать.

Малтан кисть çине шыв илĕр. Унтан чей чашки çинче хĕрлĕпе кăвак сăрсене хутăштарăр. (Кăвак сăррине ытларах илĕр). Хутăштарса тунă кăвак кĕрен тĕслĕ сăрпа хĕрлĕ кăшман ӳкерчĕкне сăрласа хурăр.

Акварельлĕ сăрсемпе ӳкернĕ чухне яланах кисть çине сăрсене сахал илме тăрăшмалла, шывне ытларах илмелле. Эпир те халĕ çавăн пекех тăвăпăр. Ӳкерчĕке кăшт типме парса, тĕксĕм пулмалли вырăнсене хăмăрпа кăвак сăрсене хутăштарса тунă сăрпа сăрласа, кăш-

манăн объемлăхне парар. Унтан каллех çав сăрпах, анчах кăваккине ытларах илсе хутăштарса, чи тĕксĕм пулмалли вырăнсене сăрласа тухар. Çакăнпа малтанлăха ўкерчĕк хатĕр теме те пулать. Халĕ вăл типнĕ вăхăтра хăяр ўкерме тытăнăпăр.

Хăяр ўкернĕ чух та эпир ăна çак майпах сăрласа тухăпăр. Малтан шупка симĕс тĕслĕ сăрпа ўкерчĕке лаптăкĕпе сăрласа тухар. Унтан ăна типме парса çĕнĕрен хутăштарса тунă сарăрах тĕслĕ сăрпа кирлĕ вырăнсене сăрласа тухар. Кăна туса пĕтернĕ хыççăн, эпир тепĕр хут хĕрлĕ кăшман ўкерчĕкне тĕплĕн ўкерсе пĕтерме тытăнăпăр.

Типнĕ хыççăн кăшман ўкерчĕкĕ çине пăхсан, эсир вăл кĕтмен çĕртенех шупкаланса кайнине асăрхатăр. Сăрсен тĕсĕсем типнĕçем малтан сăрланă чухнехинчен шупкаланаççĕ. Çапла пулмалла та. Çавăнпа та акварellĕ сăрсемпе ўкернĕ чух сăрсен тĕсĕсене кăшт тĕксĕмрех туни кирлĕ. Çапла ĕнтĕ, хĕрлĕ кăшманпа хăяр ўкерчĕкĕсен тĕттĕмрех пулмалли вырăнĕсене пирĕн кирлĕ таран тепĕр хут тĕксĕмлетсе тухмалла.

Кăшманпа хăяр ўкерчĕкĕсене лаптăкĕшпе пĕр тĕспе сăрласа тухнă чух чи çутă пулмалли вырăнсене кăтартмасăр хăварма та пултараттăр. Ку йăнăш туни мар, мĕншĕн тесен эпир ăна халĕ те çутатма пултаратпăр. Ăна

çutatac пулсан таса кисть çине шыв илсе, вăл вырăнсене çуса яни çеç кирлĕ. Анчах та ку майпа сăрсене пĕтĕмпех çуса яма çук, вĕсен тĕсĕсем кăшт та пулин палăрса тăраççĕ. Çавăнпа та ӳкерчĕкĕн çутăлса тăмалли вырăнĕсене малтанах сăрламасăр хăварсан авантарах.

Çапла ĕнтĕ ку пример тăрăх эпир аквареллĕ сăрсемпе ӳкернĕ чух тунă йăнăшсене шывпа çуса ярса тӳрлетме май пуррине пĕлтĕмĕр. Япăх хут çине ӳкернĕ чух тунă йăнăшсене темиçе хут çуса ярса тӳрлетме май çук, кун пек чухне вара çĕнĕрен ӳкерме лекет.

Халĕ тата эпир ӳкерме йывăртарах ӳкерчĕк—натюрморт—ӳкерсе, ăна аквареллĕ сăрсемпе сăрласа пăхăпăр. Ăна тума хулăран тунă пĕр корзинка, ик-виçĕ хăяр, кăшман тата кишĕр илĕр те, вĕсене сĕтел çине çапла вырнаçтарса тухăр: корзинкине хыçала хăяккăн, ыттисене ун умне вырнаçтарса хурăр. Яланхи пекех кăрандашпа малтан вĕсен контурне ӳкерсе тухăпăр, унтан вара сăрсемпе сăрлама тытăнăпăр.

Вĕсене тĕсĕсен çутăлăхĕ енчен пăхсан çакă палăрать: чи çутăраххи хăярсемпе кишĕр, тĕксĕммисем — кăшмансем пулаççĕ. Кун пек чухне сăрсемпе ӳкерме мĕнрен тытăнмалла-ха?

Ку тĕлĕшпе кашни художник хăй евĕр ӳкерет. Пĕрисем чи малтан çутăрах япаласенчен ӳкерме тытăнаççĕ, теприсем—тĕксĕм-

мисенчен, виççĕмĕшсем—малта выртакан япаласенчен. Анчах та ку тĕлĕшпе пуриншĕн те пĕр правила пур: пĕр-пĕр япалана ӳкернĕ е сăрланă чухне ăна яланах ун çывăхĕнчи ытти япаласемпе танаштарса пăхса ӳкермелле. Çапла ĕнтĕ эпир те ку ӳкерчĕке ӳкерме малтан ку япаласен (натюрмортăн) фонне—стенана танаштарса, стенана сăрланинчен пуçăнăпăр.

Çапла, ку натюрмортăн фонĕ тĕксĕм хăмăртарах пĕренеллĕ стена пулать. Куççене кăштах хĕссе, натюрморта унăн фонĕпе—стенапа танаштарса пăхăр. Кун пек пăхсан эсир, натюрморт стенаран çывăхра пулсан та, вăл фонран—стенаран—паллах уйăрăлса тăнине асăрхаса илетĕр. Кăна çеç те мар, эсир тата кун пек пăхсан фонри (стенари) мĕн пур вак-тĕвексем çухалса пĕр тĕксĕм лаптăк çеç тăрса юлнипе натюрморт тата илемлĕн курăнса тăнине асăрхаса илетĕр. Мĕншĕн тесен, куççене хĕссе пăхнипе эпир япаласен чи малтан куçа курăнакан илемлĕхĕсене çеç куратпăр, вĕсен мĕн-пур вак-тĕвекĕсем пирĕн куçа курăнмаççĕ.

Çапла куççене хĕссе пăхма кун пек натюрмортсене ӳкернĕ чухне çеç мар, пейзажсемпе портретсене ӳкернĕ чухне те кирлĕ. Вăл пире тĕслĕхсен чи кирлисене асăрхаса илме хăнăхтарать. Ӳкерчĕк фонĕн вак-тĕвекĕсене

ӳкерсе тăни кирлĕ мар. Çапла ĕнтĕ, эпир те халĕ ку ӳкерчĕкре фон ӳкернĕ чух пĕренесене уйрăмăн ӳкерсе тăмасăрах малтан çутăрах хăмăр тĕспе, унтан, вăл типнĕ хыççăн, тĕттĕмрех тĕспе сăрласа тухăпăр.

Натюрморта вырнаçтарса хунă чух яланах çутăрах япаласене тĕксĕм фон тĕлне, тĕксĕмрех япаласене çутă фон тĕлне хураççĕ. Ку майпа ӳкерчĕкре тарăнлăха (глубина) тата пространствăна кăтартма пулать. Анчах ку вăл пĕр май кăна, кун пек майсем татах та пур.

Халĕ малаллахи ĕçе тытăнăпăр. Чей чашки çинче хăмăрпа сарă сăрсене хутăштарса тунă тĕспе корзинкăн çутă вырăнĕсене сăрласа тухар. Унтан хăмăрпа кăвак сăрсене хутăштарса тунă сăрпа корзинкăн тĕттĕм вырăнĕсене сăрласа тухар.

Эпир корзинкăна стена тĕсĕсене уйрăмăн пăхса ӳкернĕ пулсан, тен вĕсене пĕр тĕслĕ сăрсемпех сăрланă пулăттăмăр. Анчах та, фонпа корзинка тĕсĕсене пĕр вăхăтрах танлаштарса пăхса ӳкернипе эпир ĕнтĕ пулма пултаракан йăнăша тумарăмăр. Пирĕн корзинкăн çутă вырăнĕсем фон (стена) тĕсĕнчен çутăрах е фонран пачах урăх тĕслĕ пулчĕç.

Халĕ ĕнтĕ ыттисене ӳкерĕпĕр. Кăшмансемпе хăярсене мĕнле майпа ӳкерессине эсир пĕлетĕр ĕнтĕ. Кишĕре ӳкересси те çавăн пе-



13-мӗш ӳкерчӗк. Натюрморт.

кех. Вӗсен уйрӑмлӑхӗ те пӗр тӗсӗс нче çеç. Хӗрлӗпе хӑмӑр сӑрсене хутӑшта а тунӑ шупкарах тӗспе кишӗр ӳкерчӗкне аптӑкӗпех сӑрласа тухӑр. Вӑл типнӗ хыçç çав сӑрпах, анчах кӑшт тӗксӗмрех туса. ттӗмрех вырӑнсене, унтан тӗттӗм хӑмӑр тӗспе чи

тĕттĕм вырăнсене сăрласа тухăр. Çапла ĕнтĕ сĕтел хăмине тата ун çинчи япаласенчен ӳкнĕ тĕксĕмсене кăтартса ӳкересси çеç юлать.

Кун пек нумай япаласене пĕрле ӳкернĕ чухне яланах япаласен тĕсĕсен вăйне пĕр-пĕринпе танаштарса пăхса, малти япаласене хыçалтисенчен çутăрах тума тăрăшни кирлĕ. Сăмахран, кишĕре хăярсемпе, кăшмансемпе танаштарса пăхсан, вăл вĕсенчен çутăрах пулмалла. Хыçалти япаласене тĕрĕс сăрламалла, вĕсем мала тухса тăма кирлĕ маррине яланах асра тытмалла.

Тĕрĕссипе каласан, кун пек натюрмортсенче тĕссен вăйĕнчи уйрăмлăх, урăхла каласан сывлăшри перспектива паллăнах курăнса тăмасть. Анчах та, урăх çĕртĕ, калăпăр, пейзажсем ӳкернĕ чухне ку сывлăш перспективине тĕрĕс кăтартса ӳкерни питĕ кирлĕ пулса тăрать.

Сывлăш перспективи вăл çутăпа тĕс свойствинчен килет. Ку свойствăна пула пире çывăхри япаласем катарисенчен çутăрах пек курăнаççĕ. Ку ыйту тĕлĕшпе эпир пейзажсем ӳкерме вĕреннĕ чух татах калаçăпăр-ха.

Çапла ĕнтĕ эпир пĕтĕм ӳкерчĕке шупкарах тĕссемпе сăрласа тухрăмăр. Вĕсене кăшт тĕттĕмрех тăвас тесен, каллех малтан фонран пуçласа, ӳкерчĕкĕн тĕсне пĕтĕмĕшпе тĕттĕмлетмелле, унтан япаласен кирлĕрех вырăнĕ-

сене тӳрлетсе тухмалла. Çапла вара ӳкерчĕк хатĕр теме те юрать.

Акварелле сăрсемпе ӳкерме хăвăртах вĕренмелле мар, нумай тăрăшас пулать, ӳкерчĕксем тăва-тăва хăнăхас пулать, вара вĕренме пулатех. Эпир кунта чи малтан пĕлме кирлĕ, çăмăлтарах майсемпе çеç паллашрăмăр.

## ПЕЙЗАЖСЕМ ӲКЕРЕССИ

Пейзажсем ӳкерме кашни ялтах тĕрлĕрен сюжетсем тупма пулать. Пире малтанлăха уйрăмăн йывăççене, çуртсене ӳкерме вĕренсен те çитĕ, тӳррех йывăрринчен ӳкерме пуçламăпăр. Пăртак хăнăхсан йывăртарах сюжетсем те ӳкерме тытăнăпăр.

Пейзажсем ӳкернĕ чух та çав ытти япаласене ӳкернĕ чухнехи майсемех кирлĕ пулаççĕ. Пуринчен ытла япаласене пĕтĕм формипе илсе ӳкерме вĕренмелле, сăмахран йывăçăн тураттисене е çулçисене уйрăмăн ӳкерсе тăни кирлĕ мар, малтанлăха йывăçа пĕтĕмĕшпе ӳкерсе кăтартма тăрăшмалла.

Кашни йывăçăн хăйĕн тĕрлĕ форми тата характерĕ пур. Пĕр йышши йывăççем те, калăпăр, хурăнсем пурте пĕр формăллă пулмаççĕ. Пĕрисем лăпсăрка илемсĕр, тепĕрисем питĕ тирпейлĕ, яштака та илемлĕ пулаççĕ.



14-мĕш ӳк. Хурăн.

Художникăн кашни япалан формипе характерне питĕ хытă сăнамалла. Çавăн чухне çеç тĕрĕс, чăн-чăн япала пек ӳкерме пулать.

Халĕ пĕр йывăç, сăмахран, хурăн ӳкерĕпĕр. Унăн характерĕпе формине сăнаса пĕлнĕ тăрăх малтан унăн вуллипе тураттисене палăртса хурăпăр. Ун хыççăн вара пире курăнакан малти ик-виçĕ туратăн çулçисене тĕплĕнрех ӳкерĕпĕр. Йывăç ӳкерчĕкне те, объемлăхне кăтартас тесен, штрихлеме пулать.

Нумай йывăççене пĕрле ӳкернĕ чухне малти йывăçĕсене çеç тĕплĕн илемлетсе ӳкермелле. Хыçалтан курăнакан йывăçĕсене контурлă линисемпе çеç ӳкерсен те юрать. Йĕркерен, калăпăр, çулăн пĕр енĕпе лартса тухнă йывăççене ӳкернĕ чух пирĕн умри йывăçĕ пире пуринчен те çӳлĕ пек, ыттисем, мĕн малалла кайнăçем, пĕчĕкленсе пынă пек туйăнса курăнаççĕ. Ку ĕнтĕ вăл пире перспективла курăнни пулать.

Йывăççене мĕнле майпа ӳкерессине тĕплĕн



15-мӗш ӳкерчӗк. Хыр. И. Шишкин художник ӳкерчӗкӗ.

ӑнланас теттӗр пулсан, эсир ҫакӑнта пичетленӗ 15-мӗш ӳкерчӗке сӑнаса пӑхӑр-ха. Унта ҫулҫӑсене мӗнле ӳкерни лайӑх палӑрса тӑрать.

Пейзажсене перопа ӳкерни питӗ усӑллӑ. Укерчӗке малтан карандашпа ҫӑмӑллӑн ӳкерсе тухса, ун хыҫҫӑн перопа ӳкереҫҫӗ. Ӑна малтан карандашпа ӳкерсе тӑмасӑрах тӳрех перопа та ӳкерме пулать, анчах та вӑл сиреншӗн тӑруках йывӑртарах пулма пултарӗ.

Пейзажсене карандашпа тата перопа ӳкернисӗр пуҫне тата кистьпе те ӳкерме пулать.



16-мӗш ӳкерчӗк. Ҫуллахи пейзаж. (Перопа ӳкернӗ.)

Кусемсĕр пуçне тата пĕр вăхăтрах перопа та шĕветнĕ тушпа та питĕ аван ӳкерме пулать.

Кун пек ӳкерес пулсан, малтан пейзажа карандашпа паллă туса тухаççĕ, унтан перопа тата шĕвĕ шĕветнĕ тушпа ӳкереççĕ. Ку типнĕ хыççăн вара тĕттĕм вырăнсене çăрарах шĕветнĕ тушпа сăрласа тухаççĕ. Çакна тунă чухне тĕттĕм вырăнсене пур çĕртине те пĕр пек тумалла мар. Япаласем пире мĕн чул çывăхрах, çавăн чул вĕсен тĕттĕм ӳкнĕ вырăнĕсем тарăнрах, тĕттĕмрех курăнаççĕ; мĕн чул катара, çавăн чул çутăрах пулаççĕ. Шĕветнĕ тушпа ӳкернĕ чухне эпир ӳкерчĕкре пĕлĕтпе çĕр тĕсĕсене те аван уйăрса кăтартма пултаратпăр. Пĕлĕт çĕртен çутăрах пулать. Шурă пĕлĕтсене е пĕлĕтсĕр куна ӳкернĕ чухне пĕлĕт вырăнне шурă хута сăрламасăр та хăварма пулать. Хура пĕлĕт таткисене ӳкерсе сăрланă чухне вĕсене ытлашши хура тĕслĕ тăвассинчен сыхланмалла.

Халĕ тата пĕр-ик сăмах шыва сăнласа кăтартасси çинчен калаçар. Шывпа пĕлĕт тĕсĕсене танлаштарса пăхăр. Хĕвел пăхнă кун шыв пĕлĕтрен тĕттĕмрех пулать. Кăнтăрла тĕлĕнче (хĕвел çӳлте пулнăран) шыв çинче çыран хĕрринчи тĕмескесенчен е йывăççенчен ӳкекен мĕлкесем пулмаççĕ. Ун чух шывра чи тĕттĕм вырăнсем малта пулаççĕ. Шыв пирĕнтен мĕн чухлĕ катара, çавăн чухлĕ унăн

тĕсĕ çутăрах пулать. Шыв çине ирхине е каçхине пăхсан унăн тĕсĕ самаях улшăнать. Ун чух шыв çине çыран хĕрри е йывăç мĕлкисем ÿкеççĕ. Хĕвел мĕн чухлĕ горизонта çывăхра, çавăн чухлĕ мĕлкесем вăрăммăн курăнаççĕ. Шыв çинче хумсем пулсан, вĕсенчен те мĕлкесем пулаççĕ. Хум мĕлкисене ÿкернĕ чух çывăхрисене шултăрарах, катарисене вĕтĕ-вĕтĕ туса пыраççĕ.

Пуринчен ытла пейзажсене сăрсемпе ÿкерни аван. Сăрсемпе ÿкерес тĕлĕшпе шĕветнĕ тушпа ÿкермелли техника пире питĕ пулăшать.

Ирĕкри япаласене (пейзажсене, т. ыт. те) сăрсемпе ÿкерес пулсан, вĕсене хăвăрт ÿкерсе пĕтерни кирлĕ. Мĕншĕн тесен, кăнтăр çутти улшăннă май, япаласен тĕсĕсем те улшăнаççĕ, сăмахран, мĕлкесем улшăнни те ÿкерчĕке самаях урăхлатать.

Кăнтăрла тĕлĕнче ÿкерчĕке пĕр сехет çурă хушшинче пĕтерме тăрăшмалла. Каçалапа тата та хăвăртрах ÿкерме кирлĕ. Çавăнпа та кун пек чух ÿкерчĕксене пĕчĕкрех тумалла.

Пейзажсене сăрсемпе ÿкерме пире ытларах тĕслĕ сăрсем кирлĕ пулаççĕ. Ку тĕлĕшпе ытти сăрсемпе пĕрле прусская-синяяпа гуммигут (çутă-сарă) тĕслисем те пулин кирлех пулаççĕ. Гуммигут вăл куракссемпе йывăççем

çинчи çутă вырăнсене ÿкерме аван. Прусская-синяяпа пĕлĕт ÿкернĕ чух усă кураççĕ. Ку сăрсене пĕрле хутăштарса сăрласан та питĕ илемлĕ тĕс пулать.

Сăрсемпе ĕçлес техникă пейзажсем ÿкернĕ чухне те çав натюрморт ÿкернĕ чухнехи пекех пулмалла. Çапах та пейзажсене сăрсемпе анчахрах ÿкерме вĕренекенсен час-часах çакăн пек йăнăшсем пулаççĕ. Пĕрремĕшĕ— симĕс тĕслĕ япаласене (курăк, йывăç) пурне те пĕр пекех ÿкерни, иккĕмĕш—çуртсене, йывăç вуллисене пурне те пĕр тĕслĕ ÿкерни. Кусем ĕнтĕ пысăк йăнăшсемех пулса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен йывăç çулçисем те пурте пĕр тĕслĕ пулмаççĕ. Кашни йывăçăн хăйне евĕр уйрăм тĕс пур. Çавăн пекех курăксенче те. Пейзажсене сăрсемпе ÿкернĕ чухне çакна яланах асра тытмалла.

Ку таранччен эпир çуллахи пейзажсем çинчен çеç калаçрăмăр. Халĕ тата хĕллехи пейзажсемпе паллашар-ха.

Паллах, хĕллехи вăхăтра ирĕкре пейзажсем ÿкерме килĕшекенсем сахал пулĕç. Çапах та кантăк витĕр пăхса ÿкерме кашниех пултарать.

Хăнăхман куç юр çинчи тĕрлĕрен тĕслĕхсене часах тĕплĕн уйăрса илеймест. Ана юр шуррăн, пĕлĕт кăваккăн çеç курăнать. Уншăн пулсан вĕсенче урăх нимĕнле тĕс те çук пек туйăн-

ма пултарать. Анчах та тĕрĕссипе вăл ун пек мар. Çутçанталăкра çара шурă е çара хура тĕссем çук, вĕсем хура е шурă евĕр (относительно) çеç курăнаççĕ. Çавăнпа та сăрсемпе ӳкернĕ ӳкерчĕкре юр вырăнне шурă хута сăрламасăр хăварни пысăк йăнăш туни пулать.

Хĕллехи пейзаж çине тĕрлĕ вăхăтсенче сăнаса пăхсан, эсир пейзаж кашнинчех пĕтĕмĕшпе урăхла курăннине асăрхама пултаратăр. Кăнтăрла тĕлĕнче юр çинче кăвакрах тĕссем нумай. Хĕвел аннă вăхăтра хăмăр кăвакрах тĕс çине çутă кăвак (фиолетовый) тĕс витĕнет.

Хĕллехи пейзаж çине кăнтăрла сăнаса пăхсан, эпир юр çинче чи çутă вырăнсем—муклашкасем, çуна е ура вырăнĕсемпе купаланса выртакан вырăнсем пулнине куратпăр. Ăна пуринчен ытла хĕвел аякра е хыçалта чухне асăрхама пулать.

Çапла ĕнтĕ, юр çинчи çутта е тĕксĕм вырăнсене ӳкерчĕкре кăтартас пулсан, эпир çакăн пек тăватпăр: малтан питĕ шĕвĕ ирĕлтернĕ кăвак, хĕрлĕ сăрсемпе, чи çутă вырăнсене сăрламасăр хăварса, юр ӳкерес вырăна пĕтĕмĕшпе сăрласа тухатпăр. Вăл типнĕ хыççăн вара кăвакрах тата хăмăр-кăвакрах тĕссемпе тĕксĕм вырăнсене сăрласа мĕлкесем туса тухатпăр. Хĕвелсĕр кун пĕлĕ-



17-мĕш ÿкерчĕк. Çуллă сăрпа ÿкернĕ. (И. Левитан ÿкерчĕкĕ. 1895 ç.)

те шупка кăвак тĕспе сăрлаççĕ; юра та çавăн пекех, анчах питĕ шĕвĕ ирĕлтерсе сăрлаççĕ.

Хĕллехи пейзажăн илемлĕхне кӳме пейзажа çуртсемпе пĕрле ӳкерсен аван. Кăвак пĕлĕт е юр тĕсĕсем тĕксĕм çуртсем çумĕнче питĕ илемлĕн курăнаççĕ.

Пейзажсене çуллахи вăхăтра пуринчен ытла выльăхсемпе пĕрле (лашасем, ĕнесем, сыснасем тата ыт. те) ӳкерсен аван. Ку тĕлĕшпе каллех ĕнтĕ малтан выльăхсене уйрăммăн ӳкерме вĕренни кирлĕ. Выльăхсенчен сыснасене ӳкерме çăмăлтарах. Малтанлăха пейзажсене çавăн пек ӳкерме çăмăл выльăхсемпе пĕрле ӳкерме юрать.

## ПОРТРЕТ ТАТА ÇЫН КĔЛЕТКИНЕ ӲКЕРЕССИ

Малтан эпир портрет ӳкерессипе паллашăпăр. Кашни çынăн пит-куçĕнче харпăр-хăй тĕрлĕ уйрăмлăх пур. Пĕрин çамки пысăк, теприн куçĕсем пĕчĕк, виççĕмĕшĕн сăмси курпун, тăваттăмĕшĕн тути çӳхе т. ыт. те. Кунсăр пуçне тата пĕрин пичĕ хĕрлĕ, теприн хĕвел çинче саралса кайнă—хăмăр, виççĕмĕшĕн шап-шурă, тата ыт. те.

Юлашкинчен тата китай çынĕн, негрăн, европа çынĕн, грузинăн, тутарăн пит-куçĕсене илер. Вĕсен кашнинех харпăр-хăй евĕр пит-

куç характерĕ пур. Пĕр сăмахпа каласан, çынăн пит-куçĕсен уйрăмлăхĕ мĕнрен килнине шутласа та кăларма çук. Çынăн пит-куçĕн çакăн пек характерлĕхĕ вăл ӳкерекенрен сăнаса е асăрхаса илме ыйтать. Эпир малтанлăха пит-куçа тĕрĕсрех ӳкернинчен, пит-куçăн хăшпĕр пропорцийĕсемпе паллашнинчен тытăнăпăр.

Хăвăр юлташсене кама та пулин ларса ӳкерттерме ыйтăр. Çаврака пит-куçлă, тӳрĕ сăмсаллă çын пулсан аван. Хусамăр ӳкерттерекене хирĕç, ăна тӳрĕ пăхса ӳкермелле, ларăр. Хут листи çине малтан пуçăн пĕтĕм формине, унтан куççене, тутана палăртса хурăр. Кун пек палăртса хунă пуç формине— тăрăхлаункăна — варри тĕлĕнчен çӳлтен аялалла пĕр линипе икĕ пая уйăрса хурăр. Ун хыççăн, хăш тĕлтен çӳç пĕтсе çамка пуçланса кайнине, сăмсаран мĕнле хушăра тута вырнаçнине астуса, çав варĕнчен туртса хунă лини çине паллă туса хурăр. Унтан сăмсан çӳлти туни вĕçĕнчен кăшт çӳлерех, тăрăхла ункăна (пуç капташки пулмалли) урлă лини туса тухăр. Ун çине куç харшисене палăртса хурăр. Куç харшисене палăртнă чух вĕсен тăршшĕне шутласа илĕр. Куç харшисенчен куççем мĕнле хушăра вырнаçнине те палăртса хурăр. Халĕ тута сарлакăшĕпе хулăнăшне шутласа илсе паллă тăвăр. Кун



18-мĕш ӳкерчĕк.

хыççăн вара хăлхасене палăртмалли çеç юлать. Лайăхрах сăнаса пăхсан, эсир хăлхасен çӳлти вĕçĕсем куç харшисен линийĕ тĕлĕнчереххине, хăлхасен аялти вĕçĕсем сăмсан аялти вĕçĕ тĕлĕнчереххине куратăр. Эсир ку лини çинче çамка, сăмса, питĕн аялти пайне пропорци тĕлĕшпе тĕрĕс шутласа илсе паллă турăр пулсан, сирĕн вăл лини 3,5 пая валеçĕнмелле. Ку шутра сăмса, çамка тата сăмсаран аялти пайĕ пĕр виçине куратăр. Пуç тӳпинчен çамка пуçланнă (çӳç пĕтнĕ) çĕре çитиччен çур сăмса виçи (кăшт ытларах та) пулать. Кунсăр пуçне эсир тата çакна асăрхама пултаратăр: куç харши тĕлĕнчен пит урлă туртнă лини пилĕк пая пайланать. Вĕсенчен пĕри—варĕнчи—сăмса тунине, иккĕшĕ куç харшисене, тата иккĕшĕ куç аяккисене пайланаççĕ.

Халĕ тата тепĕр пĕлме кирлĕ—çăвар виçи çинчен калас пулать. Вăтам çăвар сарлакă-

шĕ сăмса сарлакăш чухлĕ пулмалла теççĕ. Анчах та ку тĕрĕсех мар, çăвар сăмсаран сарлакарах пулать. Калас пулать, çапла шутлани вăл çын пит-куçĕн пропорцийĕсене вăтам шутпа (за основу) илни пулать. Ку пропорцисем вĕсем улшăнма пултараççĕ, мĕншĕн тесен, кашни çынăн сăн-сăпачĕ расна. Сăмахран, шакла пуçлă старикĕн çамка пысăкланса, питĕн аялти пайĕсем пĕчĕкленсе курăнаççĕ. Ку вăл шăлсем ӳксе пĕтнипе çӳлти шăл туни шала кĕрсе кайса, янах малалла тухса тăнинчен килет.

Халĕ ку пуç ӳкерчĕкне, ăна ӳкерттерекенĕ евĕр тума тăрăшмасăрах, малалла ӳкерсе пăхар. Сăмса, куççене, çăвар, янах, хăлхасене ӳкерĕпĕр. Эпир ку сăмса, куççем, хăлхасем, кашни çынăн тĕрлĕрен пулаççĕ тесе çӳлтех каланăччĕ. Сăмахран, эпир ӳкерекен çынăн сăмси турĕ тейĕпĕр.

Сăмсана мĕнле ӳкермелле-ха? Ăна çакăн пек ӳкерме пулать: малтан, унăн варĕнчи пайне, унтан, сăмса шăтăкĕсене. Сăмсана тӳрĕ линисемпе лаптăкла ӳкермелле мар, ун пек вăл çыпăçтарса лартнă пек пулма пултарать. Сăмсан çутă енне тĕплĕнех ӳкермесен те юрать. Ăна объемлă туса унăн формине парас пулсан, тĕксĕм енне штрихлесе те ӳкерме пулать.

Куççене ӳкернĕ чухне вĕсен сарлакăшне,

тăршшĕне тĕрĕс шутласа илни кирлĕ. Вĕсен виçисене тĕрĕс шутласа тăрăхлаункăсем тунă хыççăн тин куç шăрçисене е тата куçсен ытти пайĕсене ӳкерме тытăнас пулать.

Çăвара ӳкерме тăрăхла ункă е пуç капташки варри тĕлĕнчен тӳрĕ туртса хунă лини çумне малтан тутан çӳлти, унтан аялти хĕррине ӳкернинчен тытăнмалла. Тутаран кăшт çӳлерех те (сăмса айĕ) тата аяларах та (янах çийĕ) пĕчĕк путăксем пулаççĕ. Вĕсене штрихсемпе штрихлесе тĕксĕмлетсе кăтартма та пулать.

Хăлхасем тăрăхларах çур ункă евĕр пулса тăраççĕ. Вĕсен çӳлти пайĕсем аялтинчен сарлакарах. Вĕсене малтан пĕтĕмĕшпе контурлă линисемпе ӳкерсе, унтан вĕсен шалти пайĕсене ӳкермелле.

Çапла ĕнтĕ, çынăн пит-куçĕн пĕтĕмĕш контурĕ пулчĕ те. Кун хыççăн вара пит-куçри ытти вак-тĕвексене, пит-куçри ытти характерлĕ линисене, çӳçе тĕплĕн ӳкерме тытăнма та пулать.

Халĕ тата пуçа (пит-куçа) аяккинчен пăхса (профиль) ӳкерессипе кăштах паллашăпăр.

Ку майпа ӳкернĕ чухне те пит-куçăн пропорциллĕ валеçӳсем çав малтан хирĕç пăхса ӳкернĕ чухнехисемех юлаççĕ. Анчах ку майпа ӳкернĕ чухне пуçăн форми пĕтĕмĕшпех улшăнать. 19-мĕш ӳкерчĕк çинче эсир вăл епле

улшăннине аванах куратăр. Çапла ĕнтĕ, çамка, сăмса, янах формисем малтанхинчен пĕтĕмĕшпех улшăнчĕç.

Малтан, хирĕç пăхса ӳкерне чухне, эпир тăрăхла ункăран ӳкерме тытăннăччĕ. Ку майпа мĕнрен ӳкерме тытăнмалла-ха?

Чи малтан каллех пуç формине пĕтĕмĕшпе контурлă линисемпе палăртса хунинчен тытăнмалла. Тĕплĕн сăнаса пăхсан, ку майпа эпир ĕнсе хыçĕ янахран çӳлереххине куратпăр. Çамкапа сăмса профилĕ пĕчĕк кĕтес туса хурать. Сăмса вĕçĕнчен пăртак шаларах пит-куçăн аялти пайĕ (янах) пуçланса каять. Çапла ĕнтĕ, 19-мĕш ӳкерчĕк тăрăх, эпир пуçа профиллĕ майпа мĕнле ӳкерессине аванах ăнланса илме пултаратпăр.



19-мĕш ӳкерчĕк. Пуçа профиллĕ майпа ӳкерни.

Акă тата 20-мĕш ӳкерчĕке сăнаса пăхар. Ку ӳкерчĕкре пуçа $^3/_4$ майлă чалăшларах пăхса ӳкернине кăтартнă. Ку майпа ӳкерне чухне те малтан пуçа пĕтĕмĕшпе контурлă линисемпе палăртса хунинченех тытăннă. Çапла ĕнтĕ пуçа, пит-куçа кирек мĕнле май-



20-мĕш ӳкерчĕк. Çынăн пуçне $^{3}/_{4}$ майлă чалăштарса ӳкерни.

лă ӳкерес пулсан та, ăна малтан пĕтĕмĕшпе контурлă линисемпе паллă туса хунинчен тытăнмалла. Кун пек палăртса хунă хыççăн вара пит-куçăн ытти пайĕсене, тĕрĕс шутласа илсе, вырнаçтарса хумалла, вĕсене тĕплĕн ӳкерме тытăнмалла.

Анчах ӳкерме вĕренекенсем çынна пăхса ӳкернĕ чухне час-часах çакăн пек йăнăшсем тăваççĕ. Вĕсем яланах ӳкерчĕке (портрете) пăхса ӳкернĕ çынĕ евĕр тăвасшăн тăрăшса, е пуçа пĕтĕмĕшпе „пăхма" пĕлмесĕр е пит-куçăн пĕр пайне тепĕр пайĕпе танаштарса пăхмасăр, чи малтан пит-куçри вак-тĕвексене ӳкерме тытăнаççĕ. Çавăнпа та вара вĕсен ӳкерчĕкĕсенче час-часах çынăн пĕр куçĕ пĕ-

чĕк, тепри пысăк, чалăш, е сăмса ытлашши пĕчĕк тата ыт. йăнăшсем те пулаççĕ.

Эпир ку кĕнекере пусăн анатомийĕ çинчен тĕплĕнех каласа пани питех кирлĕ те мар пулĕ тетпĕр. Çавăнпа та вăл тĕлĕшпе пĕр-ик ўкерчĕк çеç пичетлетпĕр.



21-мĕш ўкерчĕк. Çынăн пит-куçĕнче мышцăсем мĕнле вырнаçса тăнине кăтартнă.

Пуçа, пит-куçа ўкернĕ чухне яланах çакна асра тытни кирлĕ: пит-куçăн çиелти тирĕ

айĕнче мышцă-сем пур. Çав мыш-цăсем ĕçленин-чен ĕнтĕ пит-ку-çăн мимикки (ул-шăнни) килет. Сă-махран, пит-куçра кулă мышци, куç харшисене, çӳлти тутана, сăмса çу-наттисене çĕкле-кен мышцăсем пур. Мышцăсем айĕнче пуç шăм-ми вырнаçса тă-рать. Пуç шăм-мин форми кашни çынăн хăй евĕр пулать. Пуç, пит-куç форми çав пуç шăмми фор-минчен килет.



22-мĕш ӳкерчĕк. Пуç шăмми (малтан пăхсан).

Хăшпĕр çынăн, сăмахран, ватă çынăн пуç шăмми питĕ аван палăрса тăрать. Пуçăн ана-томийĕпе тĕплĕрех паллашма шăмăсем, мыш-цăсем палăрса тăракан çынсене пăхса ӳкер-ни аван пулăшать.

Анатоми тĕлĕшĕпе ятарласа кăларнă кĕне-кесем пулаççĕ. Анчах вĕсене тепĕр чух тупса



23-мĕш ӳкерчĕк. Пуç шăмми (аяккинчен пăхсан).

илме те пулмасть. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе эсир шкулсенче наглядный пособи вырăнĕнче тăракан пуç шăммисене те пулин тупса, ăна тĕрлĕрен майлă (хирĕçле, профиль, тата ыт. те) лартса ӳкерсен питĕ аван пулĕччĕ.

Халĕ тата пит-куçăн мимикăри паллăрах выраженисемпе паллашар. Малтанах куç выраженисене илсе пăхăр. Куçсен тĕрлĕрен выраженийĕсем куçсен сарлакăшĕнчен, куç шăрçисем хăш тĕлтинчен килеççĕ. Сăмахран, куçсем хĕсĕк пулсан ыйăннине, çывăрас килнине, çын чирлине пĕлтереççĕ. Куçсене чарса пă-

рахнă пулсан, хăранине, тĕлĕннине кăтартаççĕ. Кунсăр пуçне тата куççен выраженийĕсем куç харшисем улшăннинчен те килеççĕ. Сăмахран, кулнă чух куç харшисем кăшт çӳлелле хăпараççĕ. Хăранă чух вĕсем тата ытларах çĕкленеççĕ.

Пĕр-ик сăмах çăвар мимики çинчен. Тĕрлĕрен переживанире куçпа пĕрлех тата çăвар та улшăнать. Сăмахран, кулнă чухне тутан çӳлти хĕрри кăшт çĕкленет, çăвар аяккалла сарăлать.

Эпир кунта пит-куç выраженин мĕн пур мимики çинчен тĕплĕнех каласа тăмастпăр. Вĕсенчен художнике чи кирли çинчен 21-мĕшпе 36-мĕш ӳкерчĕксенче кăтартнă.

Пит-куçăн мимикине пĕлни вăл гримсем тунă чух, портретсем ӳкернĕ чух, пуринчен ытла карикатурăсем ӳкернĕ чух питĕ кирлĕ. Мимикăна тĕплĕн ăнланса илме çынна унăн шухăш-кăмăлĕ улшăннă вăхăтра сăнаса пăхни питĕ пулăшать.

Çын сăнне ӳкерме вĕреннĕ чухне малтанлăха ку мимикă тĕлĕшпе выраженисем пама тăрăшни кирлĕ мар. Ăна тума эсир портретсем ӳкерме вĕренсе çитерехпе хусамăрах ăнланса илетĕр, вăл ун чух сирĕншĕн ытла йывăр задачах та пулмасть.

Портретсене карандашпа, кăмрăкпа, перопа тата ыттипе те ӳкерме пулать. Эпир халĕ

портретсене сăрсемпе мĕнле ўкермелли çинчен кăштах пааллашăпăр.

Эпир кашни çын пит-куçĕнче тĕрлĕрен тĕс пулать тенĕччĕ. Портретсем ўкерме анчах вĕренекенсем яланах пит-куçа кĕренрех (розовый) тĕслĕ сăрпа пĕтĕмĕшпе сăрласа тухаççĕ те тутасене хĕрлĕ сăрпа сăрласа хураççĕ, куçсене кăвак тăваççĕ, çапла вара пĕр килĕшўсĕр ўкерчĕксем пулса тăраççĕ.

Портретсене сăрсемпе ўкернĕ чухне чи пĕлме кирли—пĕтĕмĕш тĕсе тупасси, хăш тĕлте мĕнле тĕссем тата хăш тĕлте тĕксĕм вырăнсем кирлине асăрхасси, çапла вара çав вырăнсене тĕрĕс сăрласси пулать.

Çынăн çамки пит-куçăн ытти вырăнĕсенчен яланах çутăрах, хăлхасем хĕрлĕрех те çутăрах курăнаççĕ.

Портретсене сăрсемпе ўкернĕ чухне малтан пĕтĕмĕшпе пĕр тĕспе сăрласа тухмалла, унтан тĕксĕмрех пулмалли вырăнсене майĕпе тĕксĕмлетсе пымалла. Чи малтан, темиçе тĕслĕ сăрсемпе ĕçлеме тытăниччен, шĕветнĕ тушпа пуç формине туса кăтартма тăрăшса çутă е тĕксĕм вырăнсене тĕрĕс ўкерме вĕренни кирлĕ.

Портретсем чĕрĕ евĕрлĕ, илемлĕ тухма кўç шăрçисем çинче çутăлса тăракан вырăнсене сăрламасăр (шурă) хăварса ўкерни те чылай пулăшать.



24-мĕш ӳкерчĕк. Карандашпа ӳкернĕ портрет. *Андреа дель-Сарто ӳкерчĕкĕ.*

Халĕ çынăн кĕлеткине ӳкерессипе паллашăпăр. Ку ĕнтĕ, чи йывăр ĕç пулса тăрать. Хăвăр юлташусенчен кама та пулин ӳкерттерме ыйтăр. Вара хутăн варри тĕлĕпе тӳрĕ лини туртса хурăр. Куçпа виççе çав лини çине пĕтĕм кĕлетке çӳлĕшĕнче миçе пуç çӳлĕшĕ

вырнаҫнине паллӑ туса хурӑр. Вӑтам пӳллӗ ҫынсен пӗтӗм кӗлетки ҫӳлӗшне 6—7 пуҫ ҫӳллӗшӗ вырнаҫать. Ку шутпа:

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Янахран | пуҫласа | чӗчӗсем | тӗлне | ҫитиччен | 1 | пуҫ. |
| Чӗчӗсенчен | „ | кӑвапа | „ | „ | 1 | „ |
| Кӑвапаран | „ | лобок | „ | „ | 1 | „ |
| Лобокран | „ | ҫур пӗҫӗ | „ | „ | 1 | „ |
| Ҫур пӗҫӗрен | „ | чӗркуҫҫи | „ | „ | 1 | „ |
| Чӗркуҫҫирен | „ | ҫур ура туни | | „ | 1 | „ |
| Ҫур ура тунинчен | | ура лаппине | | „ | 1 | пуҫ. |




25-мӗш ӳкерчӗк. Ҫын кӗлеткине ӳкермелли виҫе.

вырнаҫҫа валеҫӗнет. (25-мӗш ӳкерчӗк.) Ҫӳлӗрех сынсен кӗлетки ҫӳлӗшӗнче 8-пус ҫӳлӗшӗ вырӑнаҫни те пулать. Сын мӗн чул пӗчӗккӗ, ҫавӑн чул ку виҫе шучӗ сахал пулать.

Ҫӳлӗ ҫынсен пӗҫҫисем кӗлеткен ҫӳлти пайӗнчен вӑрӑмрах пулаҫҫӗ. Тӗрӗс ҫанҫурӑмлӑ арҫынсен хулпуҫҫийӗ купарчаран сарлакарах. Хӗрарӑм кӗлеткине ӳкернӗ чух эсир хӗрарӑмӑн хулпуҫҫийӗ купарчаран ансӑртараххине асӑрхатӑр.

Ҫынӑн аллисем хул кӑкӗнче сарлакарах пулаҫҫӗ, алӑ лаппи патнелле ҫинҫелсе пыраҫҫӗ. Пӗҫӗсем те ҫавӑн пекех, пӗҫӗ кӑкӗнче сарлака, ура лаппинелле ҫинҫелсе пыраҫҫӗ.

Алӑсене аялалла тӳрӗ усса ярсан, вӗсем сынӑн ҫӳлӗшӗнче ҫур кӗлетке тӗлне ҫитеҫҫӗ.

Ҫын кӗлеткине тумтирпе е кӗпе-йӗмпе ӳкернӗ чухне яланах ҫынӑн кӗлетки кӗпейӗмсӗр (ҫара-пакартан) мӗнле формӑллине асра тытмалла. Ҫын кӗлеткине тумтирпе, кӗпе-йӗмпе ӳкернӗ чух тумтирӗн, кӗпе-йӗмӗн хуҫкаланчӑкӗсене ҫеҫ шута илсе ӳкерни вӑл пысӑк йӑнӑш туни пулать. Шӑмӑсем, мышцӑсем ӑҫта, мӗнле вырнаҫса тӑнине тумтир айӗпе кӑтартма тӑрӑшмалла. Ҫынӑн кӗлетки мӗнле тытӑнса тӑнине (ҫынӑн анатомине)



26-мӗш ӳкерчӗк. Ҫынӑн мышцисемпе шӑммисем.

кăштах та пулин пĕлмесĕр сынна тĕрĕс ÿкерме çук.

26-мĕш ÿкерчĕкри çынăн скелечĕ çине сăнаса пăхăр. Пуç шăммипе таз çурăм шăммипе çыхăнса тăраççĕ. Тазпа тата пĕçĕ шăммипе ура туни шăммисем çыхăнса тăраççĕ.

Кăкăр клеткине лайăхрах сăнаса пăхăр. Унта 12 аяк пĕрчи шăмми çурăм шăммипе çыхăнса тăраççĕ. Кăкăр клетки варринче кăкăр шăмми пур. Вăл шăмă çумне тата икĕ ключицă текен шăмă çыхăнса тăрать. Ку ключицăсемпе лопаткăсенчен алă шăммисем çыхăнса тăраççĕ.

Халĕ тата пăртак çын кĕлетки хускални (движени) çинчен каласа парар.

Çын хускалнă (ĕçленĕ) чух, çурăм шăмми пĕкĕ пек те авăнать. Унпа пĕрлех тата ключицăсем те хăйсен вырăнĕсене улăштараççĕ. Сăмахран, çын сулахаялла чалăшнă пулсан, çурăм шăмми те сулахаялла авăнать, ключицăсем те аялалла (сулахаялла) анаççĕ.

Анчах та çынăн кĕлетки хускалнă чух çак шăмăсем анчах мар улшăнаççĕ. Акă, çынăн кĕлетки утнă, чупнă, йывăр йăтнă чух мĕнле улшăннине сăнаса пăхар. Çын утнă чух унăн кĕлетки кăштах малалла сулăнать. Урасем сарълаççĕ, çын унчух пĕр ури çине çеç уртăнса тăрать. Çын утнă чух унăн аллисем урасем утнине хирĕçле сулланаççĕ. Çапла вара çы-

нӑн кӗлетки шӑммисем урӑхла формӑ йышӑнса тӑраççӗ.

Çын кӗлеткинчи кун пек улшӑнусем пӗр кӗлетке шӑммисенчен çеç мар, мышцӑсенчен те килеççӗ. Кун умӗнхи калаçура эпир пуç шӑмми мышцӑсемпе витӗнсе выртать тенӗччӗ. Çавӑн пекех çын кӗлеткин пӗтӗм шӑммисем те тӗрлӗрен мышцӑсемпе витӗнсе выртаççӗ.

Алӑри кӗпе çаннине хул кӑкне çити тавӑрӑр. Алӑн формине малтан аялалла усса ярса, унтан ӑна хутлатса пӑхӑр. Эсир ӑна хутлатсан унӑн форми пӗтӗмӗшпех улшӑннине куратӑр. Сирӗн хул кӑкӗ патӗнче муклашка пек мышца хӑпарса тӑчӗ. Вӑл „икӗ пуçлӑ" ятлӑ мышцӑ питӗ кӗскелнипе пулса тӑчӗ. Кунта пичетленӗ 26-мӗш ӳкерчӗк çинче çын кӗлеткинчи паллӑрах мышцӑсем умран та, хыçалтан та питӗ аван палӑрса тӑраççӗ. Эпир кунта вӗсен кашнин ячӗсене тӗплӗн каласа тӑмӑпӑр. Анчах вӗсен формисене питӗ тӗплӗн сӑнаса, вӗсем мӗнле вырнаçса тӑнине асӑрхаса тӑмалла. Мӑйри мышцӑсем çине сӑнаса пӑхӑр-ха. Эсир хӑлхасенчен ключицӑсемпе çыхӑнса тӑракан мышцӑсене асӑрхатӑр. Кӑкӑр, хырӑм, алӑ, пӗçӗсен, çурӑм мышцисене лайӑхрах сӑнӑр. Эсир çакӑнта пичетленӗ 26-мӗш ӳкерчӗке темиçе хут ӳкерсе илсен питӗ аван пулӗччӗ. Вӑл сире çын

кĕлетки епле тытăнса тăнине астуса тăма пулăшĕ.

Халĕ ĕнтĕ эпир паçăр ӳкерме тытăннă ӳкерчĕке малалла ӳкерме тытăнăпăр. Хамăр ĕçре эпир ӳкерекен юлташăн кĕлетки шăммисем, мышцăсем хăш тĕлте мĕнле вырнаçса тăнине тумтир витĕрех тупса пĕлме тăрăшăпăр. Малтан çинçе линисемпе унăн кĕлетке шăммисем, паллăрах мышцăсем хăш тĕлтине паллă туса тухăпăр. Унтан вара, вăл шăмăсемпе мышцăсене тупса паллă тунă хыççăн, ун çинчи тумтирне, кĕпе-йĕмне ӳкерме те пултаратпăр.

Ӳкернĕ чух пĕр формăна тепĕр формăпа, вĕсен пропорцийĕсене яланах танлаштарса ӳкермелле. Çын кĕлеткине пĕтĕмĕшпе пĕр вăхăтра курса ӳкерме тăрăшмалла. Çын кĕлеткин чи паллă формисене ӳкермелле, вак-тĕвексене ӳкерсе тăма кирлĕ мар.

Эпир ӳкернĕ ӳкерчĕк çинче (27-мĕш ӳкерчĕк) çын тӳрĕ, икĕ ури çине те пĕр пек тĕренсе тăрать. Тепĕр чухне çын пĕр ури çинче ытларах тĕренсе тăма пултарать (28-мĕш ӳкерчĕк.)

Çын кĕлеткине ӳкернĕ чухне мĕнле йăнăшсем пулма пултараççĕ.

Анчахрах ӳкерме вĕренекенсем час-часах çын кĕлеткине пропорцисĕр ӳкереççĕ, пуçне ытлашши пĕчĕккĕ е пысăк, е тата аллисене



27-мĕш ӳкерчĕк. Икĕ ури ҫинче те пĕрпекех тĕренсе тăрать.



28-мĕш ӳкерчĕк. Хăрах ури ҫине ытларах тĕренсе тăрать.

кĕске туса йăнăшсем тăваççĕ. Алăсене, урасене уйрăммăн ӳкерсе хăнăхас пулать.

Ҫынăн кĕлетки (ҫан-ҫурăмĕ) хуҫкаланчăк. Ҫавăнпа та вăл темиҫе майлă та пулма пултарать. Малтанлăха ӳкерме йывăр хускануллă ӳкерчĕксемех ӳкермесен те юрать. Сăмахран, йывăр йăтакансене, вутă ҫуракан-

сене, утă çулакансене ӳкере-ӳкере хăнăхсан питĕ лайăх пулмалла.

Çынăн кĕлетки, çан-çурăмĕ тĕрлĕрен хусканусем тунине яланах сăнамалла. Ку тĕлĕшпе çуллахи вăхăтпа усă курма пулать, çуллахи вăхăтра шыва кĕрекенсем сахал мар вĕт.

Тумтир тăхăннă çын кĕлеткине акварельлĕ сăрсемпе ӳкерессисинчен каласа тăмастпăр та. Ку тĕлĕшпе çутă тĕслĕ кĕпе-тумтирлисене, сăмахран, çутă тĕслĕ тутăр, сапун, кĕпе, кĕрĕк тăхăннă çынсене ӳкерме çеç сĕнме пултаратпăр.

Çынсене çара-пакартан ӳкерессисинчен пăртакках чарăнса тăрар. Пит-куç, алăсем, урасем тата хырăм тĕсĕсене сăнаса пăхăр. Пит-куç, алăсем, урасен тĕсĕсем пуринчен те тĕксĕмреххисем пулаççĕ. Хырăм—пуринчен те çутăраххи пулать. Паллах, çан-çурăмăн нумай тĕслĕхĕ çинчен калани те кирлĕ мар. Çавăн пекех çан-çурăм кашни çынăн харпăрхăй тĕслĕ пулни çинчен те каламăпăр. Çынăн çан-çурăмне сăрсемпе ӳкернĕ чухне çак уйрăмлăхсене яланах асра тытмалла, пур çынна та пĕр тĕслĕ туса ӳкерме кирлĕ мар.

Юлашкинчен тата виç-тăват е ытларах çынсен ушкăнне ӳкерессисинчен пĕртак каласа парас тетпĕр.

Çынсене уйрăмăн ӳкерме вĕреннĕ хыççăн

пĕр вăхăтра темиçе çынна пĕрле ӳкерме те йывăр мар.

Çынсем темиçен пӳхăнса тăнă е ларнă чухне вĕсем пурте пĕтĕмĕшпех курăнмаççĕ. Çавăнпа та кун пек чух малтисене çеç пĕтĕмĕшпе тĕплĕн ӳкерме лекет. Хыçалта тăракан çынĕсене ун пек чухне контурлă линисемпе çеç ӳкереççĕ.

Анчах та, кун пек темиçе çынна пĕрле ӳкернĕ чух перспектива правилисене яланах асра тытмалла. Перспектива правилисене тĕрĕс туса ӳкернĕ ӳкерчĕкре малти çынĕсем пу-



29-мĕш ӳкерчĕк. Çынсене ушкăнпа ӳкерни.

ринчен те пысӑкрах пулмалла. Ытти ҫынӗсем мӗн чул каярах, ҫавӑн чул пӗчӗкленсе пымалла.

Темиҫе ҫынна пӗрле ӳкернӗ чухне вӗсене кашнине уйрӑмӑн ӳкерсе тӑмалла мар, пурне те пӗр вӑхӑтра пӗтӗм формӑпа палӑртса пырса ӳкермелле. Ҫынсем группӑланса тӑнӑ е ларнӑ чухне вӗсен пӗтӗмӗшле форми е виҫкӗтеслӗ, е тӑваткӑл, е урӑх формӑллӑ пулать. Эпир сире малтанлӑха ик-виҫ ҫынран ытла пӗрле ӳкерме хушмастпӑр. Ҫынсене группӑпа ӳкерме вӗренсе ҫитсен, эсир хусамӑр шутласа тупса композициллӗ картинӑсем те ӳкерме пултаратӑр.

## ÇУЛЛĂ СĂРСЕМ ТАТА ВĔСЕМПЕ ĔÇЛЕССИ

Çуллă сăрсемпе ĕçлесси çинчен пĕчĕк кĕнекерех ниепле те тĕплĕн каласа пама çук. Çапах та, эпир кунта çуллă сăрсемпе ĕçлеме чи малтанлăха мĕн пĕлме кирлине кĕскен те пулин каласа парасшăн.

Çуллă сăрсене художниксем нумайĕшĕ хăйсемех хатĕрлесе тăваççĕ. Эпир сире хатĕр сăрсемпе усă курма сĕнетпĕр. Картинăсем çырмалли çуллă сăрсем тюбикре пулаççĕ. Малтанлăха пире цинковая белила, кадмий, кармин, ультрамарин пулсан та çитет. Ку сăрсенчен, акварелле сăрсене хутăштарса урăх тĕс тунă пекех, пĕр тĕслипе тепĕр тĕслине хутăштарса, темиçе тĕслĕ те тума пултаратпăр.

Çуллă сăрсене шĕветме ятарласа тунă лаксем, сиккативсем пулаççĕ. Сăмахран, петроль, скипидар. Кусене тупаймасан чĕрĕ кантăр çăвĕпе е йĕтĕнпе хĕвелçаврăнăш çăвĕсемпе

те усă курма пулать. Анчах ку çусемпе шĕветсен çуллă сăр хăйĕн пахалăхне чылаях çухатать, тĕксĕмленет, е ытлашши шĕветсен сарăлса каякан пулать тата типнĕ хыççăн пĕркеленет.

Çуллă сăрсемпе пуринчен ытла грунтланă пир çине çыраççĕ. Кунсăр пуçне тата фанер, тимĕр листи, картон çине те çырма пулать. Пир, фанер е картон çине çырас пулсан, вĕсене малтан лайăх грунтлас пулать. Грунтлас тени вăл—пире, картона тата фанера хытарас, вĕсен витĕр çуллă сăр сăрхăнса тухмалла мар тăвас тени пулать. Ытларах усă куракан е туса хатĕрлеме çăмăлтарах грунта çакăн пек япаласенчен тăваççĕ:

| | |
|---|---|
| Желатин | 16 гр. |
| Глицерин | 4 куб. см. |
| Белила (цинковая) | 100 гр. |
| Шыв | 400 куб. см. |

Кун пек грунт тумалли белила типĕ, порошокпа пулать.

Кун пек грунта та туса хатĕрлеме май килмесен, шĕвĕрех ирĕлтернĕ столярнăй çилĕмпе те грунтлама пулать.

Çуллă сăрсемпе çырма акварellĕ сăрсемпе çырмалли кистьсем юрамаççĕ, вĕсем валли урăх йышши хытăрах шăртлă кистьсем кирлĕ пулаççĕ. Вĕсенчен малтанлăха 2,4,6,10,12 №-лĕ кистьсем пулсан та çитет. (2-мĕш ўкерчĕке пăх.) Çуллă сăрсемпе çырнă хыççăн, кистьсе-

не яланах керосинпа çуса тасатса хурас пулать. Унсăран вĕсем сăрă типсе ларнипе часах пăсăлма пултараççĕ.

Çуллă сăрсене хурса шĕветсе çырма фанер листинчен ятарласа тунă япала—палитра кирлĕ.

## ÇИЛĔМЛĔ СĂРСЕМ ТАТА ВĔСЕМПЕ ĔÇЛЕССИ

Çилĕмлĕ сăрсем типĕ, авăртнă мел (пурă) евĕрлĕ. Вĕсене шĕвĕ ирĕлтернĕ столярнăй е малярнăй çилĕм шывĕпе шĕветеççĕ. Иквиç тĕслине хутăштарса урăх тĕс тăвас тесен вĕсене малтан кашни тĕсне уйрăмăн кўршек е консерва банки çинче шĕветсе хутăштараççĕ. Çилĕмлĕ сăрсемпе ĕçлеме çуллă сăрсемпе ĕçлемелли кистьсемех юраççĕ. Пысăкрах япаласене сăрлас е çырас пулсан пысăкрах маляр кистьĕсемпе усă курас пулать.

Çилĕмлĕ сăрсемпе хут, пир, фанер тата ытти япаласем çинче те çырма пулать. Кирек мĕн çине çырас пулсан та, ăна малтан шĕвĕ çилĕмпе шĕветнĕ мелпа (пурăпа) грунтлас пулать.

Çилĕмлĕ сăрсемпе пуринчен ытла çуртсене уявсенче илемлетнĕ чухне, е клубсенче сценăсене декорациленĕ чухне ĕçлеççĕ. Çилĕмлĕ сăрсемпе ĕçленĕ чухне ăна яланах примус е вучах çинче ăшăтса ирĕлтерсе тăрас пулать.

Шăнса çăралса ларнă сăрпа çырма юрамасть, вăл хăпăнса ўкме пултарать. Çавăнпа çилĕмлĕ сăрсене яланах вĕри шывпа ирĕлтерессĕ.
Çилĕмлĕ сăрсемпе ĕçленĕ чух йăнăш тунине çийĕнчех шывпа çуса ярса (сăмахран, пир çинче ĕçленĕ чух, лозунгсем çырнă чух) юсаççĕ. Йывăç е ытти япаласем çинче ĕçленĕ чух тунă йăнăша тўрлетес пулсан ўкерчĕке типĕтес пулать, вара çавăн çинех тепĕр хут тўрлетсе çырас пулать.

## УЯВСЕНЧЕ КЛУБСЕНЕ ТАТА ШКУЛСЕНЕ ИЛЕМЛЕТЕССИ

Уявсенче клубсене, шкулсене тата ыт. те пуринчен ытла лозунгсемпе, портретсемпе илемлетеççĕ. Ун пек чух хăшпĕр лозунгсем çине пăхсан вĕсем куçа илемлĕн курăнса каяççĕ, вĕсене вара вулас килет, вĕсене часах вуласа илме те пулать. Анчах тепĕр лозунгсем çине пăхсан вĕсем килĕшўсĕррине часах асăрхама пулать, сăмахсене слогсем тăрăх çеç вуласа ăнланса илме пулать. Ку ентĕ паллах лозунгсене çырма пĕлнипе пĕлменнинчен килет.
Лозунгсем илемлĕ, часах вуласа илмелле пулччăр тесен пуринчен ытла вĕсене вулама çăмăл шрифтсемпе çырмалла. Кун пек шрифтсенчен илемлĕрех хисем тўрĕ, квадратлă е

тата буквăсен кĕтесĕсене çавракалатса çырнă шрифтсем пулаççĕ (30-мĕш ӳкерчĕк).

**АБВГДЕЖМ**
***АБВГ* абе *25***

30-мĕш ӳкерчĕк.

Лозунгсене çырма тытăниччен малтан хĕрлĕ хăмач е хут çине сăмахсене йĕркесене пайласа, буквăсен виçисене тĕрĕс палăртса хуни кирлĕ. Буквăсен виçисене шутласа илнĕ чух вĕсене ытлашши çӳлĕ е сарлака тумалла мар. Буквăсемпе буквăсен хушшисем пурин те пĕр пекех пулмалла. Буквăсен сарлакăшне валеçсе паллă тунă чух М, Ш, Ю, Ж, Щ, Ф, Ы буквăсен сарлакăшне ытти буквăсенчен сарлакарах тумалла. Т, Г, Е, Ё, С, Ç, буквăсен сарлакăшне ансăртарах хăварсан та юрать (30-мĕш ӳкерчĕке пăх).

Лозунгсен илемлĕхĕ тата вĕсене мĕнле тĕслĕ хут çине мĕнле тĕслĕ сăрсемпе çырниччен те килет. Сăмахран хĕрлĕ çине шурă е сарă, тĕксĕм япаласем çине çутă, çутă япаласем çине тĕксĕм сăрсемпе çырсан илемлĕ тухать.

Кунсăр пуçне тата лозунгсене сахал йĕркеллĕ туса çырма тăрăшмалла. Сăмахран, пĕр хĕрлĕ хăмач сарлакăшне виçĕ йĕркерен ытла çырни кирлĕ мар. Лозунгсене çилĕмлĕ сăрсемпе çырмалла. Хĕрлĕ хăмач е пир çине çилĕмлĕ сăрсемпе çырнă лозунгсем тусанпа, пылчăкпа варалансан е кивелсен, вĕсене çуса тасатса çĕнĕрен çырма та пулать. Çилĕмлĕ сăрсемпе хут çине те çыраççĕ. Çырасса кистьсемпе çырмалла, анчах вĕсене малтан сăрсенчен çуса тасатас пулать.

Уявсенче лозунгсемсĕр пуçне тата яланах портретсене, плакатсене пысăклатса ӳкерме лекет. Вĕсене клеткă тăрăх пысăклатса ӳкерме çăмăл. Кун пек чухне портрета е плаката тӳрĕ линисемпе пĕр пек тӳркĕтеслĕ клеткăсене пайлаççĕ. Унтан пысăклатса ӳкерес хут е ытти япала çине çав шутах кирлĕ чухлĕ пысăклатса клеткăласа тухаççĕ Портрета е плаката куçарса пысăклатса ӳкернĕ чухне улшăнса каясран клеткăсене номерлесе тухаççĕ. Малтан портрета е плаката контурлă линисемпе йĕрлесе тухаççĕ, унтан, тĕрĕс пысăклатса куçарнине тĕрĕсленĕ хыççăн, кирлине пĕтĕмĕшпех ӳкерсе тухаççĕ.

Портретсене шурă пир çине хура сăрпа пысăклатса ӳкерсен аван. Кистьсемпе аван ĕçлеме вĕренсен, портретсене фото-ӳкерчĕксенчен те питĕ илемлĕн пысăклатса ӳкерме




31-мĕш ӳкерчĕк. Пĕчĕк ӳкерчĕке пысăклатса ӳкересси.

пулать. Уявсенче кун пек пысӑклатса ӳкернӗ ик-виҫ портрета, ик-виҫ илемлӗ ҫырнӑ лозунга тата виҫ-тӑват ялава лайӑх вырнаҫтарса ҫапсан, ялсенчи клубпа шкулсене тулашӗнчен ҫителӗклӗ таран илемлетнӗ теме те пулать




32-мӗш ӳкерчӗк. Клуб. 1—2 вырӑна лозунгсем вырнаҫтармалла, 3, 4, 5 вырӑнсене портретсем ҫакмалла.

## КЛУБСЕНЧЕ ДЕКОРАЦИ ТӐВАССИ

Паллах, ку кӗске калаҫура клубсенче декораци тӑвассине пур енчен те ӑнлантарса пама ҫук. Ҫавӑнпа та эпир кунта чи ҫӑмӑл-

тарах декораци тăвасси çинчен çеç кĕскен ăнлантарса пама тăрăшăпăр.

Ялти колхозсенчи клубсенче декорацисене йывăççемпе тата майăх çĕлемелли пирпе тума пулать.

Ялти клубсенче спектакльсем лартнă чух час-часах ялти е хулари çуртсен пӳлĕмĕсене, вăрмана, килкартисене туса кăтартма лекет.

Калăпăр, пирĕн ĕлĕкхи чухăн хресчен пӳрчĕн ăшиккине туса кăтартмалла. Ун пек пӳртĕн ăшиккинче чи характерлă япаласем: тайлăк сĕтел, кĕç-вĕç йăтăнса анас пек кăмака, тата пĕр-ик пĕчĕк кантăксем пулаççĕ. Сценăна çапла пирпе декорацилес пулсан, 60-90 см. сарлакăш пире кăвак е хăмăр тĕспе сăрласа сценăн икĕ енĕпе 2—3 ĕретĕн çакса ямалла. Кун пек çакса ярсан, сценă хыçĕнчен е аяккинчен курăнакан япаласене картласа тăрать. Сценă хыçĕнчи стена пĕренерен пулсан, ăна нимĕн картламасăр çаплипех хăварма та пулать. Унта вара хутран сăрласа тунă хресчен çурчĕн кантăкне çеç çыпăçтарса хумалла. Вăл хыçалти стенана чуссенчен е ытти япаласенчен тунă пулсан, вара ун çине çав пиртен çĕлесе тунă занавеса çакса ярас пулать. Вăл занавес çине çилĕмлĕ сăрсемпе хресчен пӳрчĕн стенине ӳкерме пулать. Унтах тата кантăкне те тумалла. Пӳртĕн ытти стенисене, кăмакине тă-

вас пулсан ун пек пире йывӑç рамкӑ çине вырнаçтарса ӳкерес пулать. Çапла тусан кирлӗ мар чухне декорацие аяккалла илсе хума та пулать.



33-мӗш ӳкерчӗк. Декораци. Ӗлӗкхи чухӑн хресчен çурчӗ.

Декорацире хулари, е хальхи колхозниксен çурчӗсен пӳлӗмӗсене тӑвас пулсан, кун пек пӳлӗмӗн характерлӗхӗ çапла пулмалла: çӳлӗ алӑк, пысӑк кантӑк, пӳлӗмре тасалӑх, тирпейлӗх. Кун пек декораци тунӑ чух стенасене çӳлте каланӑ пекех рамкӑсем туса ун çине шпалер çыпӑçтарса тума пулать. Кун пек

декорацисенче час-часах тата дивансем кирлĕ пулаççĕ. Ана тума хыçлă икĕ пукан çине утиял витсе хумалла та, диван пулчĕ те.



34-мĕш ӳкерчĕк. Декораци. Колхозник çурчĕ.

Декорацире вăрман, килхушши тăвас пулсан, çуллахи вăхăтра сценă çине кирек мĕнле йывăç тyратти те лартма пулать. Хĕллехи вăхăтра çуллахи декорацие тăвас пулсан, чăрăш е хыр тураттисемпе декораци тăваççĕ.

Кирек мĕнле спектакль валли декораци тăвас пулсан та пьесăна малтан вуласа ту-

хас пулать. Пьеса ҫинче кӑтартса панӑ тӑрӑх пулас декорацин эскизӗсене авкареллӗ сӑрсемпе хут ҫине туса хумалла. Хатӗр эскизсем тӑрӑх декораци тума ҫӑмӑл.

Декорацире пӳлӗмсем тунӑ чух тата ширмӑсемпе усӑ курма пулать. Ширмӑна кирек мӗнле майлӑ та лартма пулать. Вӑл ӗҫе татах та ҫӑмӑллатать.

Хулари театрсенче, клубсенче декораци тунӑ чух пуринчен ытла фанерпа усӑ кураҫҫӗ. Фанер ҫине тунӑ декорацие хӑвӑрт куҫарса лартма пулать. Сӑмахран, фанер ҫине икӗ енне те декораци тӑваҫҫӗ те, картинӑ улшӑннӑҫем ҫавӑрса ҫеҫ лартаҫҫӗ. Фанертан тунӑ декорацие ҫуса тасатса, ун ҫине урӑх декораци тума та пулать. Чипер упраса усрама пӗлсен 7—8 фанер листи темиҫе постановка валли те ҫитет.

## СТЕНА ХАҪАТНЕ ИЛЕМЛЕТЕССИ

Стена хаҫачӗн илемлӗхӗ пуринчен ытла ӑна укерчӗксемпе илемлетнинчен килет. Стена хаҫатӗнчи ӳкерчӗксем хаҫатӑн илемлӗхне кӳнисӗр пуҫне тата унта ҫырнӑ статьясене лайӑхрах ӑнланса илме пулӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та стена хаҫатӗнчи ӳкерчӗксене мӗнле тӑвассипе вӗсене хаҫатра мӗнле вырнаҫтарасси ҫинчен тӗплӗн пӗлни кирлӗ.

Стена хаҫачĕ валли ӳкерчĕксем тума тытăниччен малтан редколлегинчен хаҫатăн текстлă материалне илсе, вĕсене тĕплĕн вуласа тухас пулать. Вуласа тухса ăнланнă хыҫҫăн, хăш статьяна хăш тĕле вырнаҫтарассине, хăш статьяра мĕнле ӳкерчĕксем, карикатурăсем кирлине палăртса хурас пулать.

Ӳкерчĕксем валли вырăн хăварнă чух вĕсене пурне те пĕр кĕтессе е віррине, пĕр тĕле пулмалла тумалла мар. Е тата ӳкерчĕксем питĕ нумай тата ытла пысăк пулсан та хаҫат илемлĕхне чакарать. Хаҫатра ӳкерчĕксем $^1/_3$ пайран ытла пулмалла мар.

Пуринчен ытла стена хаҫачĕн заголовкине (ятне) илемлĕрех тума тăрăшас пулать, мĕншĕн тесен заголовкă вăл хаҫатăн пичĕ пулса тăрать.

Заголовкăн илемлĕхĕ хаҫатăн ятĕнчен те килет. Хаҫатăн ячĕ темиҫе сăмахлă пулни аван мар. Нумай сăмахлă заголовкăна ҫырнă чухне вĕтĕ буквăсемпе ҫырма лекет, вĕтĕ буквăсене илемлĕн ҫырма хĕнтерех.

Заголовкăна илемлетнĕ чухне хаҫатăн ячĕпе ҫыхăнса тăракан ӳкерчĕксемпе илемлетесҫĕ (35-мĕш ӳкерчĕк). Анчах заголовкăна пĕтĕмĕшпех ӳкерчĕксемпе тултарса лартни те кирлĕ мар.

Лайăх илемлетнĕ заголовкăна нумайлăха хăварма пулать. Кун пек чух хаҫата ҫĕнĕ-

рен кӑларнӑ май номерӗпе числисене ҫеҫ улӑштарса тӑраҫҫӗ.

Заголовкӑ евӗрех тата статьясен ячӗсене те ӳкерчӗксемпе илемлетме пулать. Калӑпӑр, статья колхоз ферми ӳсӗмӗсем ҫинчен калать. Кун пек статьян ятне (заголовкине) фермӑри выльӑхсене ӳкерсе илемлетме пулать (35-мӗш ӳкерчӗк). Ҫавӑн пекех тата статьясен




35-мӗш ӳкерчӗк. Стена хаҫачӗн макечӗ.

хыҫне те концовкӑсемпе илемлетме пулать.

Стена хаҫатне ӳкерчӗксемпе илемлетнӗ

чухне час-часах тата диаграммăсем тума лекет. Диаграммăсем скучнă ан пулччăр тесен, вĕсене ÿкерчĕксемпе илемлетмелле. Калăпăр, колхоз ÿсĕмĕ çинчен диаграмма туса кăтартмалла. Кун пек диаграммăна пучахсемпе е колхозăн ытти пурлăхĕсемпе илемлетме пулать. Тепĕр чух тата кун пек диаграммăсене фото ÿкерчĕкĕсем çине те тума пулать. Сăмахран, ферма ÿсĕмне кăтартас пулсан, фермăри выльăхсене ÿкерсе илнĕ фото ÿкерчĕкĕсем çине тума пулать. Кун пек тума май çук пулсан, пĕр-пĕр хаçат е журнал çинчен çавăн евĕрлĕ ÿкерчĕке ÿкерсе илсе е касса кăларса ун çине те тума пулать. Ÿкерчĕксене хура тушпа е акварелĕ сăрсемпе ÿкерсен аван.

Халĕ тата карикатура ÿкересси çинчен каласа парар.

Карикатура вăл ÿкерчĕке кулăшла туса ÿкерни пулать. Карикатура вăл хаçата чĕрĕлетет, ăна вулас килет. Карикатурăра чи кирли—ăна кулăшла тăвасси. Çавăнпа та карикатурăна ÿкернĕ чух, вăл кулăшла, характерлĕ пултăр тесен, яланах çакна асра тытмалла: çынăн сăмçи вăрăм пулсан, ăна тата вăрăмрах, çÿçĕсем лапсăрка тирпейсĕр пулсан, ăна тата тирпейсĕртерех, пичĕ сарлака, мăнтăр пулсан, ăна тата сарлакарах тата ыт. те туса ÿкермелле.




36-мĕш ӳкерчĕк. Сынăн пит-куç мимикки тĕрлĕ вăхăтра мĕнле улшăнни.

Карикатура ӳкерес пулсан çынăн пит-куçĕн мимикне питĕ аван пĕлни кирлĕ. Çын хăраса ӳкнĕ пулсан, вăл куççене чарса пăрахать, куç харшисем çӳлелле хăпарса тăраççĕ. Карикатурăра çаксене раснах палăртмалла.

Çынсене карикатурласа ӳкернисĕр пуçне тата ытти çитменлĕхсене те карикатурласа ӳкерме пулать. Сăмахран, колхозра инвентарсем тирпейсĕр япăхса выртаççĕ. Вĕсем çуллахи вăхăтра япăхса выртаççĕ пулсан, вĕсем çине кăмпасем шăтса тухнă туса ӳкерме пу-




37-мӗш ӳкерчӗк. Карикатура.

лать. Хӗллехи вӑхӑтра пулсан, вӗсене юр айӗнче кӑшт кӑна курӑнакан туса ӳкерме пулать. Кун пек чухне ҫав япаласене патӗнчех ӳкерсе илсен тата та авантарах пулӗччӗ.

Стена хаҫатне ӳкерчӗксемпе, карикатурӑсемпе илемлетнӗ чухне вӗсене статьясене ҫырнӑ хут ҫине мар, уйрӑм хут листи ҫине ӳкерсен авантарах, мӗншӗн тесен, тепӗр чух

ӳкерчĕк тĕплĕ пулман пирки, ăна тепĕр хут ӳкерме лекет. Çапла вара пĕрре çырнă статьяна тепĕр хут çырма лекет.

Çакăнпа ĕнтĕ эпĕ ку кĕнекене вĕçлетĕп. Укерме вĕренĕр.

---

## ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

1. Умӗн калани . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
2. Ӳкерме вӗренме мӗнле хатӗрсемпе материалсем кирлӗ. . . . . . . . . . . . . . . . 7
3. Ӳкерме мӗнрен тытӑнмалла. . . . . . . . . . 10
4. Акварелӗ сӑрсемпе ӳкересси. . . . . . . . . 23
5. Пейзажсем ӳкересси. . . . . . . . . . . . . 33
6. Портрет тата ҫын кӗлеткине ӳкересси. . . . . 42
7. Ҫуллӑ сӑрсем тата вӗсемпе ӗҫлесси. . . . . . 65
8. Ҫилӗмлӗ сӑрсем тата вӗсемпе ӗҫлесси. . . . . 67
9. Уявсенче клубсене, шкулсене илемлетесси. . . 68
10. Клубсенче декораци тӑвасси. . . . . . . . . 72
11. Стена хаҫатне илемлетесси. . . . . . . . . 76

Редактор Н. Иванов. Техредактор Ф. Яковлев.

Послано в производство 16/VI-39 г. Подписано к печати 10/XI-39 г. Упол. Чувашглавлита № 1882. Заказ № 546
Объем 2,75 п. л. Тираж 3000 экз.

г. Чебоксары. Тип. № 1 Наркомместпрома ЧАССР.

Цена 1 руб. 30 коп.

Г. ХАРЛАМПЬЕВ

# ЮНЫЙ ХУДОЖНИК

В помощь начинающим рисовать

Госиздат ЧАССР
1939